Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ДЕКАБĔР
16
ЕРНЕКУН
287(5100) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Комсомол кадрĕсене большевикла воспитани парасси

Совет çĕршывĕнчи нумай мĕлйунлă комсомол — коммуниссен партийĕн тĕрĕс помошникĕ тата унăн резерви. Пирĕн парти йертсе пынипе Ленинла комсомол çамрăксене коммунисла воспитани парать, вĕсене Совет влаçĕ тавра пĕтĕçтерет. Комсомолăн вайĕпе хăвачĕн çăлкуçĕ вăл—Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыни. Вăл комсомола, çамрăксене етемĕн лайăх йăлисене—большевикла принциплăх, идейăлăх, харамăнлăх, хăйулăх, паттăрлăх парса ÿстерет. Çак паллăлăха комсомол кадрĕсем, пирĕн пĕтĕм çамрăксем çĕр çинче, сывлăшра, тинĕс çинче—куллен-хи вĕçемсĕр нумай ĕçсенче тăвакан геройла пултарулăхра куллен-кун кăтартса пыраççĕ.

Çамрăксен Коммунисла Сойузĕн 1920 çулта пулнă III-мĕш сĕсĕнче Владимир Илйич Ленин коммунисăм общĕстви тăвас чăнчăн задачĕсем шăпах та çамрăксем умĕнче тăраççĕ, тенĕ, мĕншĕн тесен:

„... капиталисăм общĕствинче воспитани илсе ÿснĕ работниксен ăрăвĕ, лайăх йенчен илсен те, експлуатаци çинче тытăнса тăракан капиталисăмла кивĕ йăлан никĕсĕсене пĕтерес задача кăна татса пама пултарать. Вăл, лайăх йенчен илсен те, пролетариатпа ĕçлĕх класа влаçа хăйсен аллинче тытса тăма тата çирĕп никĕс тума пулăшакан общĕствăлă устройства тăвас задачĕсене кăна татса пама пултарать; çак никĕс çинче, ĕçе çĕнĕ условисенче, çынсем хушшинче експлоататăрла отношенисем çук обстановкăра тытăнна ăру анчах тума пултарать."

Комсомол пирĕн çĕршыв пурнăçĕнче пысăк вырăн йышанса тăрать. Социалисăм строительствин, çĕршыв оборонин, наукăпа культуран ответлă участкисенче комсомол çитĕнтерĕ çамрăксем ĕçлеççĕ. Çавăнпа та комсомол кадрĕсене идейа йенчен пиçĕхтерес, большевикла воспитани парас задачă уйрăмах пысăккăн тухса тăрать. Кунта ыйту: социалисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-хăватне пама хатĕр тăракан, йăварлăхсенчен хăраман, массăпа таччăн çыхăнса тăракан, вĕсен сĕнĕвĕсемпе сигналĕсене сисĕмлĕн итлеме пĕлекен, халăх тăшманĕсене палласа илсе çĕмĕрсе тăкма пултаракан комсомол работникĕсене воспитани парасси çинчен тăрать. Комсомол работникĕ вăл—марксисла-ленинла теорине куллен-кун вĕренсе алла илсе пыракан, общĕствă аталанăвĕн саккунĕсене вĕренекен, вĕсене пĕлекен, тĕнчерипе çĕршыври обстановкăра ориентировкă илме пĕлекен боец. Вăл—Совет общĕствин малта пыракан çамрăк çынни, вăл производствăра, государствăн кирек мĕнле ĕçĕнче те дисциплинă, организаци тĕслĕхĕсене кăтартать.

ПСÇЛКС Тĕпкомне тата комсомолăн хăшпĕр облаç комитет руководствисене кĕрсе кайнă тăшмансем комсомол кадрĕсене идейăлă воспитани, большевикла пиçĕхÿ парас ĕçе пур майсемпе те пĕтерсе лартма тăрăшнă. Вĕсем комсомол работникĕсем хушшинче тирпейсĕрлĕхе хăнăхтарма, теори йенчен кайа йулнă çынсем тума тăрăшнă. Йăла тĕлĕшĕнчен пасса, çемйелĕх, пĕр-пĕрне хÿтĕлемеле йĕрке туса вĕсем çамрăксен идейăлă пурнăçне пĕтерсе хума тăрăшнă.

Партин Тĕп Комитечĕ пулăшнипе комсомол руководствинчи тăшмансене тăрă шыв çине кăларнă. Халĕ комсомол умĕнче тăшман кайашĕсене вĕçне çитиччен пĕтерес, тăшмансем хăнăхтарса пынă çĕрĕклĕхе, большевисăма хирĕçле йĕркесене вĕçне çитиччен тапалтарса кăларас, комсомол активĕпе çамрăксене политикăла воспитани парассине çÿле хăпартас задача тăрать. ПСК(б)П Тĕпкомĕ парти пропаганди çинчен йышăннă постановлени,—вăл партипе совет интеллигенцийĕн анлă сийĕн идейăлă пурнăçĕнче пысăк çĕкленÿ тапратрĕ, — комсомол кадрĕсене политикăла воспитани парас системăна çĕнетсе тухмали çăрауççи пулать. Комсомолăн кашни работникĕн пирĕн партин Тĕп Комитечĕ: „пирĕн кадрсем марксисăм-ленинисăм теорине пĕлмесен, большевисăма вĕренсе ала илмесен, хăйсем теори тĕлĕшпе кайа йулнине пĕтермесен икĕ урипех ухсахлĕç, мĕншĕн тесен, социалисăм строительствин пур отраслисене те тĕрĕс йертсе пырас задачă—практиксене марксисăм-ленинисăм теорин никĕсĕсене вĕренсе алла илме хушать, практикăлă ĕçĕн ыйтăвĕсене татса панă чухне теори тăрăх ĕçлеме пĕлнине ыйтать", тесе кăтартса пани тăрăх ĕçлемеле.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕн историйе тăрăх кăларнă кĕнеке Совет интеллигенцине, пирĕн кадрсене, вăл шутра, комсомол работникĕсене те, тивет. Апла пулсан та, комсомол руководителĕсенчен нумайĕшĕ кадрсене малта тăракан революциле теорине вĕренсе алла илме активлăн пулăшас ĕçе организацилес вырăнне, уйрăм кăтартусем парасса кĕтсе лараççĕ. Теслĕхрен, комсомолăн Тула Обком çекретарĕ Ковтун йулташ районри организацисене „директивăсем пуласса кĕтĕр!" тесе кăтартă панă. Комсомол работникĕсем Тула облаçĕнче те парти историне харпархăй тĕллĕн вĕренесшĕн, анчах вĕсем нимçан та пулăшу илмеççĕ. „Директивăсем пуласса кĕтĕр"—çака ĕнте комсомол обкомĕ йенчен пулнă пĕртен-пĕр бÿрократла директивă. Комсомолăн Кийĕв Обкомĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕ парти пропаганди çинчен постановлени кăларнă хыççăн комсомолăн пуçламĕш комитет çекретарĕсене канашлăва пухнă та, çакăнпа чарăнса ларнă.

Пирĕн çамрăксен умĕнче марксисла-ленинла теорине, пĕтĕм пĕлÿлĕхсен пу анлăхне, наукăн пĕтĕм çÿлĕшĕсене вĕренсе алла илмели пур майсем те уçă. Большевиксен асла ăрăвĕ патша йăттисем хĕсĕрлевĕ вăхăтра вĕреннĕ, марксисăм ленинисăм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕреннĕ, вăл произведенисем ун чухне пысăк йăварлăхпа тата питĕ те пысăк мар тиражпа тухса тăнă. Пирĕн совет çамрăкĕсен умĕнче институтсен, библиотекăсен, вуламалли вырăнсен алăкĕсем анлăн уçăлса выртаççĕ. Пирĕн çамрăксем телейлĕ вăхăтра, марксисăм ленинисăм произведенийĕсем мĕлйуншар тиражпа тухса тăракан вăхăтра пурăнаççĕ. Çамрăк совет интеллигенцийĕн комсомол кадрĕсен аллинче марксисăм-ленинисăма вĕренсе алла илмели чаплă пособи—„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" пур.

Апла пулсан, комсомол кадрĕсен малти революциле теорине вĕренсе алла илес ĕçре вĕренес камăл, çирĕп характĕр палăртни кăна кирлĕ. Комсомолецсен хушшинче, комсомол активĕ хушшинче теорине вĕренме пулăшакан обстановкă мăнкăмăлланнине, хăвна ху нумай пĕлекен çын вырăнне хунине, теорине хакла аннине, вĕренÿ çинче „епĕ пурне те пĕлетĕп, манăн нимĕн вĕренмели те çук" тесе пăхнине тапалтарса кăлармалли обстановкă туса хурас пулать. Владимир Илйич Ленин çамрăксене çакăн пек мăнкăмăлланса çÿлтен пăхакансем çинчен мĕнле йуратмасăр тăрăхласа каланине аса илес пулать:

„Епĕ хамсахал пĕлнине пĕлсе тăратăп пулсан, епĕ нумайрах пĕлесине туса çитеретĕп, анчах çын, епĕ коммунис, манăн нимĕне те тĕплĕн пĕлни кирле мар, тесе калать пулсан, вăра унтан коммунис йеверли нимĕн те тухас çук".

Çывăх вăхăтра комсомол конференцийĕсем пуçтанаççĕ. Çак конференцисенче комсомол активĕн халăхи вăхăтра пулса иртекен пухăвĕсенче çамрăксене идейăлă воспитани парас ĕçри çитменлĕхсене чăннипе критиклессине, самокритикăлассине сарса йарас пулать. Большевикла самокритика комсомола хăйĕн речĕсенчи тăшмансен агентурине вĕçне çитийĕх кăкласа пăрахма, комсомолăн пĕтĕм ĕçне çÿлĕ идейăлăхпа пуйанлатма пулăшать. Комсомолецсен çĕнĕ кадрĕсене йертсе пыракан вырăна хăйуланрах лартса пырас пулать, бÿрократсенчен, иккĕлентерекен, пасалнă, çамрăксен массисенчен уйăралса кайнă çынсенчен таткăлăн тасалса пырас пулать.

Комсомол организацийĕсенчи пĕтĕм идейăлă-воспитаниле ĕçсем çак пысăк та кирлĕ тĕллевне—çамрăксенчен кунсеренех пирĕн парти тата унăн ленинла-сталинла Тĕп Комитечĕ çавăншăн кĕрешекен аслă ĕçе пĕтĕм чĕререн паранна кадрсем тултас тĕллевпе туса пырас пулать. Халăхăн пĕтĕм тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçе вĕçне çитийĕх тума пултаракан, нимĕнрен хăраман тата çивчĕ куçлă боецсем пăхса ÿстерес пулать. Хамăр çамрăксене воспитани парса, парти йертсе пынипе сталинла çул тăрăх, коммунисăм туллийĕнех çĕнтересси патне илсе пырас пулать.

(„ПРАВДА", 1938 ç. 15/XI.)

Англин тулашри политики

Декабĕрĕн 13-мĕшĕнче Англи правительствин премйер-министрĕ Чемберлен йут çĕршыв журналисĕсен ассоциацийĕ 15 çул тултарнă йатпа пулнă вечĕрта сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Англин тулашри политикă ыйтăвĕсем çинчен чарăнса тăнă.

Чемберлен тата тепĕр хут Мÿнхĕнри килĕшĕве пула вăрçă сиксе тухма пултарассине сирсе йатамăр, тенĕ.

Мÿнхĕнри килĕшÿ хыççăн Германипе Итали агреççийĕ тата ытларах вăйланни çинчен пĕр сăмах та асăнмасăр интересе йанă хыççăн, Чемберлен йулашки вăхăтсенче тунă тĕрлĕ килĕшÿсене асăнса тухнă. Çаван пек килĕшÿсем вĕсем Англи Ирландипе, 1938 çулта апрелре Италипе тунă килĕшÿсем, Англипе Германи, Францăпе Германи декларацийĕсем. Йулашкинчен Чемберлен Англипе Америкă хушшинче тунă суту-илÿ договарĕ çинчен асăнса илнĕ.

Мÿнхĕнри килĕшÿ майлă пулса каланă пулсан та, Чемберленăн: „Германи хаçачĕсем халăхи вăхăтра хăйсене хăйсем тыткаланă пирки культăнма тивет" тесе каламалла пулнă. „Германи хаçачĕсем государствă çыннисенчен чи хисеплекен çын çине, нумайах пулмаст премйер-министр пулнă çын çине мăшкăлтăк шывĕ такаççĕ. Халăхи вăхăтра государственнăй деятелсем хушшинче контакт тумалли майсем питех те сахал. Анчах çакна Женевăра тума май килмест пулсан, пирĕн урăх çулсем шырас пулать. Çавăнпа та епĕр Галифакспа иксĕмĕр Итали правительствин пуçлăхĕпе калаçма йанвар уйăхĕнче Рима кайма шутлатпăр".

Йулашкинчен Чемберлен çапла каланă: „халăхи вăхăтра мир пурри чен ытла лăпкăлăхпа шанăçлăх çук пирки питех те аптрать. Пĕрпĕринчен уйăралса каймалли вырăнсем мар, пĕр-пĕрипе килĕшмели вырăнсем шырас пулать. Англи тÿррех Францине хирĕç вăрçăпа тухас вăхăт та пулнă. Пайан çакăн пек вăрçă пачах пулмала мар пек туйанать. Англипе Франци хушшинче çыхăнусем таччăн пулса тăчĕç, вăл çыхăнусем тасаран йуридически çыхăнусенчен килеççĕ. мĕншĕн тесен вĕсем пирĕн интереçсем пĕр пек пулни çинче тытăнса тăраççĕ".

(ТАСС).

Чемберлен сăмахĕ пирки хаçатсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДАН, декабĕрĕн 13-мĕш. Чемберлен ĕнер общинăсен палатинче тухса калани, вăл Итали Франци çине тапăнас пулсан, Францине сыхлас тĕлĕшпе Англин нимĕнле „йатарласа панă обйазательствă та çук", тесе калани, Англи правительстви тĕлĕшпе оппозицире тăракан политикăлă деятелсене хытă кăмăлсăрлантарнă.

Либераллă „Нйус кроникл" хаçат умстатйара: Чемберлен панă ответ—„килĕшÿсĕр йапала", тесе çырать. Çак ответпа,—тет хаçат,—Англи премйер-министрĕ Италине хĕтĕртет кăна. Итали ĕнтĕ Франци çине тапăнма йурать, Англи Франци майлă тăрассинчен шикленмели çук, тесе шухăшлĕ.

„Дейли телеграф енд морнинг пост" хаçат редакци йенчен нимĕнле комментарисем те çырмаст, анчах хăйĕн Франциri корреспонденчĕ Пертинакс пĕлтернине курăнмалла вырăнта пичетлесе кăларать. Пертинакс: Чемберлен хăйĕн декларацийĕ вăлли çакăн пек форма суйласа илнешĕн Парижра кăмăлсăрланаççĕ, тесе çырать.

„Дейли телеграф енд морнинг пост" хаçатăн Римри корреспонденчĕ: Чемберлен каланине Италире „питĕ кăмăлласа кĕтсе илчĕç, мĕншĕн тесен вăл калани пĕтĕмĕшпех Итали шутласа хунисемпе килĕшÿлĕ йапала", тесе çырать.

(ТАСС).

—о—

„Пионер" колхозăн ÿсĕмĕ

1934 çултан пуçласа кăçалхи çулччен Тутаркас районĕнчи „Пионер" колхоз хуçалăхĕ вăйлăн çирĕпленчĕ. 1934 çулта колхоз пурлăхĕ 27.300 тенкĕлĕх пулнă пулсан, кăçалхи çул 81.200 тенкĕне çитнĕ. Уйхир тупăшĕ пысăккăн ÿсни вăхăтрах укçа-тенкĕ тупăшĕ те вăйлăн ÿссе пырать. 1934 çулта укçан илнĕ тупăш 2.000 тенкĕ пулнă, кăçал 24.700 тенкĕне çитнĕ.

Кăçалхи çул ĕçкунĕ тăрăх 6 килограм тĕштырă, 1 тенкĕ те 75 пус укçан валеçеççĕ. Колхозри стахановеç Михаил Андрианăв 366 пăт тырă, 1750 тенкĕ укçа илет. 1-мĕш звенон звеновочĕ П. Сергейĕв çемйере иккĕн çеç ĕçлевĕ пулин те, 227 пăт тырă, 1085 тенкĕ укçа илет.

Кăçалхи çул пыл утăрĕнчен пысăк тупăш—7 200 тенкĕ илнĕ. Ĕçкунĕсем тăрăх 4—6 пăт таран пыл илекенсем вуншар хуçалăх шутланаççĕ.

Халĕ çитес 1939 çулхи çуракине хатĕрленессипе колхозниксем хĕрсех ĕçлеççĕ. Уйа тислĕк каларăççĕ, кĕл пухаççĕ, машинсене йусаççĕ, т. ые. те.

Пр. Йаркуçкин.

ВАЛЕРИЙ ПАВЛĂВИЧ ЧКАЛĂВ

Правительствă пĕлтерни

ССР Сойузĕн Правительстви епĕр пурăнакан вăхăтри Аслă лĕтчик Совет Сойузĕн Геройĕ **Валерий Павлăвич Чкалăв** çĕнĕ самолĕта сăнанă чухне çак çулхи декабĕрĕн 15-мĕшĕнче вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ хурланса пĕлтерни

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ **Валерий Павлăвич Чкалăв** йулташ çемйине Совет Сойузĕн Геройĕ Чкалăв йулташ вилнĕ пирки хуйхăрни çинчен пĕлтереççĕ.

* * *

ССР Сойузĕн Правительстви йышăннă:

1. Чкалăв йулташа пытарма Правительствă Комиççине организацилес, Комиççи составĕ: Булганин (председатĕл), Щербаков, Локтионăв, Громăв, Байдуков, Беляков йулташсем.
2. Чкалăв йулташа пытарассине государствă çине илес.
3. Чкалăв йулташа Хĕрлĕ плошчĕтре Кремĕл стени патĕнче пытарас.
4. Чкалăв йулташ çемйине персональнăй пенçи парса тăмала тăвас.

Димитров йулташ Лейпцигри судра

1933 çулти февралĕн 27-мĕшĕнче Германири рейхстаг çуртĕнче пушар тухнă. Çак провокацилĕ ĕçе фашиссем организациленĕ. Рейхстаг çуртне вут чĕртсе йани—пролетариатăн революциле йухăмне хирĕç террорла поход пуçлама чĕнекен çигнал пулнă. Рейхстаг çуртĕнче вут тухнишĕн пĕтĕм айăпа коммуниссен партийĕ çине йăвантарса, фашиссем революциле пролетариата хирĕç йăвлă террор пуçланă. Нимĕç халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене—Германири коммунисла парти членĕсене теçет-и теçеткипе пуçĕсене касса вĕлерне. Фашисла режима йышăнман рабочисене, интеллигентсене пинĕ-пинĕпе тĕрмесене хупса лартнă тата концентрациле лагерсене ăсатнă. Пĕтĕм çĕршывĕпе йеврей халăхне хирĕç харушă погромсем пуçланă. Наукăпа культурăн чи лайăх представителĕсене урăх çĕршывсене кăларса йанă. Пысăк хуласенчи асла урамсенче етемлĕхĕн культура, наука, искусствă пуйанлăхĕсене пĕтĕçтерсе тăракан кĕнекесене вутă пек шашанласа çунтарнă. Германине хура реакци сĕрĕм пек хупласа илчĕ.

1933 çулти çентабĕрĕн 21-мĕшĕнче Лейпцигра пуçланнă судăн тĕллевĕ—Германири коммуниссен партине тата Коммунисла Интернационала, февралĕн 27-мĕшĕнчи ĕçшĕн ответлă туса, нимĕç халăхĕ умĕнче тата пĕтĕм тĕнче умĕнче варалаçа тăкасси пулнă. Лейпцигри судпа усă курса, Германи фашисĕсем хăйсен тискерлĕхне тÿрре кăларма тата хăйсене—„Йевропăна большевисăмран çăлнă" вăй пек кăтартса, пĕтĕм тĕнчери общественнăç умĕнче ырра тухма ĕмĕтленнĕ.

Çак ĕмĕте пурнăçа кĕртесшĕн, Лейпцигри суда организацилекен фашиссем нимĕнле ирсĕр ĕçсем тума та чарăнса тăман. Димитров йулташа тĕрмере сăнчăрласа усранă. Коммуниссене хирĕç свидетĕл пулма, судра мĕнпур етемлĕх кайашĕсене—психопатсене, морфиниссене, суйеçĕсене, вăрăсене, суйа документ тăвакансене тăратнă. Темĕн тĕрлĕ провокаци тунă. Суд пынă вăхăтра Димитров йулташа час-часах сăмах калама чара-чара лартнă.

Анчах Германи фашисĕсен провокацилĕ ĕçĕ йăмарĕ. Айăпланакансен скамйи çине лартнă коммунис Георгий Димитров йулташ Лейпцигри процеса пачах урăх йеннеле çаварса йачĕ. Следстви вăхăтĕнче вăл фашисла прокуратурă таратнă свидетелсене—печĕккисене те, пысăккисене те, фашисла правительствă пуçлăхĕсем таранах—ыйтусем парса, вĕсем тăрăшшĕпех суйа сăмахсем çеç калани тăрă шыв çине кăларчĕ. Коммуниссен партине айăпласа каланисем йăлтах вырăнсăр, тĕрĕ мар пулнине, Лейпцигри суд хăй те коммуниссен партине хирĕçле провокаци çеç пулнине кăтартрĕ. „Есĕр ман ыйтусенчен хăратăр курăнать, господин министрсен совечĕн председателĕ?"—тет судра Г. Димитров, вăрттăн тăрăхласа, Германири фашисла правительствăн пуçлăхне Геринга, вăл хăйĕн суйа кăтартăвĕсенче пĕтĕмпех çыхланса ÿкнĕ хыççăн.

Декабĕрĕн 16-мĕшĕнче Димитров йулташ судра йулашки сăмах каларĕ. Çак сăмах Германи ĕçхалăхне тискер пусмăр айне тунă фашисăма çапакан аслати пек йанăрарĕ. „Епĕ—хăйĕн професçилĕ ĕçне кăна тунă çĕрте тăракан адвокат мар. Епĕ хамăн политикăла тата революциле чысăма, хамăн коммунисла ăсхакала, хамăн идейăсене, хамăн пурнăçан пĕтĕм ăшчикĕпе тĕллевне хÿтĕлетĕп", тенĕ Димитров хăйĕн йулашки сăмахне пуçласанах.

Рейхстаг çуртне вут тĕртсе çунтарни çинчен калаçнă чух фашисла хаçатсем Болгари халăхĕ çинчен елеклесе çырнă тата ăна, Димитрова, хăйне те «тискер болгарин" тесе айăпланă. Урçа кайнă фашиссем йеплле çырнисене палартса, Димитров йулташ мăнаçлăн çапла каланă:

«Йут çĕршывсен пусмăрĕ айĕнче 500 çул хушши хăйĕн чĕлхине те, хăйĕн национальнăçне те çухатмасăр пурăннă халăха, Болгаринчи фашисăма хирĕç, коммунисăмшăн кĕрешнĕ тата кĕрешекен пирĕн рабочи класпа пирĕн хресчĕнсене,—çакăн пек халăха варвăр тата тискер тесе калама çук». «Анчах епĕ ыйта ăп сиргет, господин председатĕл,—тесе ыйтнă Димитров çаван хыççăн,—мĕнле çĕршывра фашисăм варвăр тата тискер пулса тăмать?».

Фашиссен сучĕ Димитров йулташа хăйĕн сăмахне каласа пĕтермесĕрех чарса лартнă. Димитров йулташ çапах та каласа йулма ĕлкĕрнĕ:

«Епĕр, коммуниссем, халĕ ватă Галилейран пĕртте кайа мар çирĕплĕхпе калама пултаратпăр: «Çапах та вăл çаврăнать». Истори кустăрми çаврăнать, малала, советлă Йевропă патнеле, Советлă Республикăсен Пĕтĕм Тĕнчери Сойузĕ патнеле çаврăнать. Çакă кустăрмана, Коммунисла Интернационал йертсе пынипе пролетариат хăваласа пыраканскерне, пĕтерсе лартас тесе тунă хăйар ĕçсемпе те, катăргăна йаракан пригаварсем йышăннипе те, пуç касса вĕлернисемпе те чарма май килмĕ. Вăл çаврăнать, коммунисăм пĕтĕмĕшпе çĕнтериччĕнех çаврăнса пырĕ вăл!».

Г. Димитров йулташ
(Бюро-клише ТАСС).

Ирсĕр суд та, тĕрме те, вĕлеретпĕр тесе хăратнисем те Димитровăн хăйулăхне хуçайман. Коммуниссен партин чи лайăх членĕ, ватă революционер пулса, Димитров йулташ фашиссен сучĕ умĕнче хăраса ÿкмен, тăшмансене çунтармала питленĕ, вĕсен исĕр ĕçĕсене никамран хăрамасăр тăрă шыв çине кăларнă.

М. С.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти Тĕпкомĕн решенине пăсма йурамасть

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ“ тухнă май партири тата партире тăман большевиксен марксисăм-ленинисăм теорине вĕренес, парти историне вĕренес хаваслăхĕ нихăçанхинчен те çÿле çĕкленчĕ. Марксисăм-ленинисăм теорине, парти историне вĕренмели майсене парти Тĕпкомĕ кăçалхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленире тĕплĕн кăтартса пачĕ.

Анчах та партин хăшпĕр организацийĕсем хăйсен задачине тĕрĕс мар ăнланнисем пур. Çапла „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне“ хăвăрт вĕренсе пĕтерме шухăшлакансем пур мĕн. Улангай йалкор (Вăрнар р.) пире çапла çырса пĕлтерет: „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ“ тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен“ ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине илсен учитĕлсем ПСК(б)П историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренме тытăнчĕç. С. Иванов, Н. Васиљĕв, В. Белейĕв, Н. Иванов йулташсем „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн“ виçĕ сыпăкне вĕренсе пĕтерчĕç те ĕнтĕ“. Тĕлĕнмеле, Тĕпком постановлени тухни пĕр уйăх та çитмен вăхăтра парти историн виçĕ сыпăкне вĕренсе пĕтерсе, тăваттăмĕш сыпăкне вĕренме тытăннă та!

Кадрсене политикăлă воспитани парас ĕç çине çапла çиелтен, çăмăл шухăшпа пăхнипе пула ĕнтĕ. Куславкка районĕнчи Тĕрлемесри вăтам шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем „кашни шăматкун виççĕшер сехетлĕхе пухăнса, ПСК(б)П истории Кĕске курсне вĕренеççĕ“. Çак факт ĕнтĕ кунта Тĕпком постановленине ăнланса илменни, пропаганда ĕçне, парти историне вĕренес ĕçе хăвăрт тумали кампанилĕ ĕç вырăнне хуни çинчен каласа парать.

Çĕрпÿри фельдшерсен шкулĕнче парти историне вĕренме 8 кружок организациленĕ, 9 заняти туса ирттерме ĕлкĕрнĕ те. Кружоксем кашни вунă кунра пĕрре пухăнса икшер сехет „вĕренеççĕ“. Паллах ĕнтĕ, пĕр регламент тăрăх икшер сехет вĕренни парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленипе нимĕнле те çыхăнмасть.

Парти пропаганди ĕçĕнче çакнашкал пăсăксем çаплипех пулса пынине парти райкомĕсем курсах тăраççĕ. Анчах та вĕсем йăнăшсене тÿрлетес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем туни çук. Коммуниссене, комсомолецсене, совет интеллигенцине „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне“ харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пур майсемпе те пулăшас, лекцисем, консультацисем йĕркелĕ ирттерес вырăнне, нумай шухăшласа тămасăр, кружоксене кĕртсе ПСК(б)П историне васкавлăн вĕренме тытăнни марксисăм-ленинисăм теорийĕпе хĕçпăшалланас ĕçе сийенлет çеç. Çапла пулин те пропаганда ĕçĕнче усăсăр васкасси çаплах пĕтмен-ха. Редакцине: „кружок турăмăр, унта çавăн чухлĕ çын çырăнчĕç. ПСК(б)П историн виççĕмĕш сыпăкне вĕренсе пĕтерсе, тăваттăмĕш сыпăкне вĕренме тытăнтăмăр“ тесе çырнисем татти-сыппиcĕр килеççĕ.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ“ тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен“ ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленийе кăшт та пулин пăсни те парти пропагандине, хамăрăн кадрсене большевисăмпа хĕçпăшаллантарассине вăйсăрлатать, çавăнпа та парти райкомĕсен çак йăнăшсемпе çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме тăрăшни кирлĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ декабрĕн 3-мĕшĕнче йышăннă постановленире ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине пурнăça кĕртмели конкретлă майсене кăтартса панă. Парти райкомĕсен, парткомсемпе парторгсен халĕ пропаганда ĕçне Тĕпком решенийĕ тăрăх урăхлатса çĕнетес йĕнĕпе вăйа хурса ĕçлемеле. Вĕсен марксисăм-ленинисăм теорине харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси тĕп вырăнта пулмалине асра тытмала. Тĕпком решенине кашни коммуниса, комсомолеца, совет интеллигенцине тĕплĕн ăнлантарса памала, çак историлĕ решенийе тĕрĕс пурнăçласа пропаганда ĕçне çÿле çĕклемеле.

Иртĕннĕскерне райком çекретарĕнчен те, райком членĕнчен те кăларчĕç

ТРАК. Çак кунсенче коммуниссен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенийĕсене сÿтсе йăвре. Пленум решенисем çинчен парти Обкомĕн çекретарĕ Шакăв йулташ доклад туса пачĕ.

Парти райкомĕ коммуниссене лайăх пĕлтермен пирки, пуху вăхăтра уçăлмарĕ тата хăшпĕр коммуниссем (вĕсене райком пĕлтермен) пухура пулаймарĕç.

Иккĕмĕш ыйтупа пуху ПСК(б)П Трак райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ пулнă Çвешникăв çинчен сÿтсе йăвре. Тухса калакансем Çвешникăв хăйне хăй пысăка хурса мăнкăмăлланса кайни, коммуниссене хисепе хуманни çинчен, унăн çитменлĕхĕсене критиклекенсене кабинета чĕнсе йăтлесни, вăрçни çинчен, партилĕ-политикăлă ĕçе йăпăхтарни çинчен каларĕç.

Партилĕ-политикăлă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе Çвешникăв нимĕн те туман. Парткабинетра парти историне вĕренекенсем валли лекцисем туса ирттерме палăртнă кун ытти канашлусем туса лекци ирттерессине хăй чăрмантарса пынă. Парткабинетăн радиоприймникне хăй патĕнче усраса парткабинета радиосăр хăварнă.

Парти ретне ÿстерес тата комсомола пулăшас ĕçпе интересленмен. Унтан та ытларах, Çвешникăв комсомол райкомĕн çуртĕнче парикмахерски уçма „директива“ панă.

Тухса калакансем Çвешникăвăн киревсĕр ĕçĕсене çивĕччĕн критиклерĕç. Пуху ăна парти райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕнчен тата райком членĕнчен кăларчĕ.

Г. Закамский.

Комсомолецсемпе ĕçлеме тытăнман

Чатукассинчи (Трак р-нĕ) „Труженик“ колхоз çумĕнчи комсомол комитечĕн çекретарне Николайĕв йулташа суйлани уйăх ытла ĕнтĕ. Анчах вăл комсомолецсемпе ĕçлеме тытăнман-ха. Пуçламĕш организацин ĕç планĕ çук, политвĕренÿ ĕçне йĕркелемен. Николайĕв йулташ комсомол организаци ĕçĕсене кивĕ çекретартан халĕ те йышăнман-ха. Çавăнпа та вăл комсомолецсем миçе уйăх хушши член укçи тÿлеменнине те пĕлмест.

Ст. Владимирăв.

Вăрман хатĕрлевĕ

„Броневик“ колхоз вăрман хатĕрлевĕнче

Услапари „Броневик“ колхозран (Вăрнар р.) сакăр колхозник ийуљ уйăхĕнчен пуçласа пĕр тăтăлмасăр вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи ĕç нормине йаланах 200 процентран кайа мар тултарса, куллен 30—35 тенкĕ йахăн ĕçлесе илеççĕ.

Бригада виççĕмĕш кварталти вăрман турттарас плана 200 процент тултарчĕ; халĕ вăл тăваттăмĕш кварталта тата 1939 çулти пĕрремĕш кварталта вăрман турттарас плана срукчен тултарассишĕн кĕрешет.

Çавăн пекех Сретенскийпе Корзаков йулташсем йертсе пыракан бригадăсем те вăрманта лайăх ĕçлеççĕ.

Н. Козлов

Ăмăртăва чĕнчĕç

Чăрăшкас-Мăратри (Вăрнар р.) „11 лет Чувашии“ колхоз членĕсем республикри вăрман хатĕрлев ĕçĕнчи работниксемпе стахановецсен канашлăвĕ чĕнсе калнине йышăнса, вăрмана ĕçлеме кайма пулчĕç. Вĕсем хăйсем çине IV-мĕш квартал планне срукчен тултарса 1939 çулхи I-мĕш кварталти план шутĕнчен йанварĕн 1-мĕшне 340 кубла метр хатĕрлеме, 660 кубла метр турттарма обйазательствă илчĕç.

Колхоз Тÿлÿкассинчи „Комсомолец“ колхоза социалисăмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

П. Йефимăв.

Ӳсĕмсене çирĕплетсе

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан савăт иртнĕ уйăх планне 109 процент тултарнă. Халĕ савăтри рабочисемпе работниксем тунă ÿсĕмсене çирĕплетсе татах та лайăхрах ĕçлесе пыраççĕ.

Декабрĕн 10-мĕшĕнче раскройнăй цехри стахановка М. Йефимăвă йулташ нормăна 241,1 процент, атă-пушмак çĕлекен цехри М. Шатмайĕв йулташ 249,5 процент, Иванова (чувйачнăй бригада)—200 процент тултарнă. Декабер уйăхĕн планне 123 процент тултарнă, заготовочнăй цех йаланах 120—130 процент таран тултарса ĕçлет.

Федăрăв.

16 колхозник ĕçлеççĕ

ТРАК. Йанмурзинă колхозĕ Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствине ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе пысăк пулăшу парать. Çентйабр уйăхĕнче ку колхозран 48 çын ĕçленĕ, халĕ 16 çын ĕçлеççĕ. А. Киçељов.

Епĕр государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра тултартăмăр

Пирĕн колхоз государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарас йĕнĕпе йаланах малти ретре пынă. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра парса татни хамăрăн тăван çĕршывăн вăйхăватне вăйлатма пулăшнине аван пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа та епĕр пур парăмсене те чи малтан, пур ĕçсенчен маларах парса татма тăрăшатпăр.

Сĕт-çу фермин йĕнĕпе епĕр хамăр районри пур колхозсенчен те малтан, ийуљ уйăхĕнчех сĕт-çу парса татрăмăр. Çавнашкалах аш-какай обйазательствине тултартăмăр, аванс шучĕпе 1939 çулшăн та панă.

Государствăна контрактаци договĕрĕ тăрăх сÿс-кантăр тата махорка ытлашшипех панă. Сÿс-кантăр йĕнĕпе договăра ытлашшипех тултарса, паха сÿс панăшăн 2 пин тенкĕ таран преми-надбавка илме пултартăмăр, махорка йĕнĕпе те çавнашкалах. Çапла вара, техникла културăсене вăхăтра тата ытлашшипех пани государствăна пысăк пулăшу пулать, тепĕр йенчен, колхоз та тупăш илет. Çавăнпа та пирĕн колхозниксем колхоз тата хăйсен обйазательствисене вăхăтра тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Епĕр çĕрулми тăратас плана колхоз йĕнĕпе октйабрĕн 7-мĕшне, колхозниксем йĕнĕпе октйабрĕн 10-мĕшне тултартăмăр. Йулашки йулнă çĕрулмине страховка фончĕ тата вăрлăхлăх хăварнă хыççăн колхозниксене кашни ĕçкунĕ çине пĕрер килограм валеççе патăмăр.

Государствăна тĕштырă, натурплата тыррине вăхăтра парса татнă. Епĕр укçа-тенкĕ парăмĕсене те çийĕнчех тултарса пыратпăр. Çентйабрĕн 1-мĕш тĕлне колхоз тата колхозниксем страховка тата ытти налогсене, займ укçине парса татнă. 1938 çулшăн пирĕн колхозăн тата колхозниксен государствă умĕнче нимĕнле парăм та çук. Чылай колхозниксем 1939 çулта памали аш-какай планне те тултарнă.

Колхоз председателĕ Илйин.
Бригадирсем: Михайлăв.
Михайлăв.
Смирнов.

Трак районĕ, Уйкас Йунтапа

Йединоличниксемпе ытларах ĕçлес пулать

Вăрмар районĕнчи йалсоветсемпе колхозсем государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарас йĕнĕпе йулса пыраççĕ. Вăрмар районĕ государствăна тырпул тăратас плана 94 проц., çĕрулми хатĕрлев планне 49 проц., аш-какай обйазательствине 74 проц. анчах тултарнă. Уйрăм йалсоветсем тата колхозсем государствă умĕнчи парăмсене парса татассишĕн тăрăшмаççĕ. Хатĕрлевсене вăхăтра парса татма массăна мобилизацилемеççĕ, массăлă-ăнлантарулă ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ Урнар йалсовечĕ чăтма çук кайа йулса пырать.

Районра йединоличниксем хушшинче тимлĕн ĕçлемеççĕ. Вĕсем государствăна тыра тăратас плана та 72 процент анчах тултарнă. Çавнашкалах йединоличниксем аш-какай, сĕт-çу парас йĕнĕпе йулса пыраççĕ.

В. Алендейĕв.

Кăтартулă фермă

Виç-тăватă çул ĕнтĕ Хумпуçĕнчи (Йĕпреç р.) „Правда“ колхозри сысна ферми районра пуриншĕн те паллă, кăтартулă фермă шутланса тăрать.

Ку фермă çинчен йалти колхозниксем кăна мар, таврари колхозсем те лайăх пĕлсе тăраççĕ.

7—8 çул кайарах ку колхозра—„кирлĕ мар пире сыснасем, уссине парас вырăнне сийенне кăна кÿреççĕ, апатне çитерни чухлĕ уссине парас çук“, тейĕ сăмахсене илтме кăна пулатчĕ. Анчах халљ пачах урăхла ĕнтĕ. Фермă 3—4 çул хушшинче 30 пин тенкĕлĕх тупăш панă. 1938 çулта 9 уйăх хушшинче колхоз фермăран 12.800 тенкĕлĕх тупăш курнă.

Фермăра ăратлă сыснасем ÿссе çитĕнеççĕ. Вĕсен шучĕ çултан çулах ÿссе пырать. Кашни колхозник фермăри пекех ăратлă сыснасем ĕрчетме тăрăшать. Çапла вара, паян куна „Правда“ колхозра сысна усраман çын та çук.

Кунтах тата фермă пуçлăхĕ Петров тата свинарсем хăйсен ĕçĕсене йуратса ĕçлени çинчен асăнса хăварас пулать. Свинарсем сыснасене çав тери йуратса пăхаççĕ. Апатсене йаланах вăхăтра çитереççĕ, витесене таса тытаççĕ. Сыснасене йаланах тасатаççĕ.

Фермă пуçлăхĕ Петров свинарсене ĕçре йаланах çителĕклĕ пулăшу парса пырать. Вăл хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Колхозниксем ăна: пирĕн Дмитрий выљăх-чĕрлĕх маçтăрĕ, — теççĕ. Петров 6 уйăхлăх курс пĕтерчĕ. „Правда“ колхоз ферминчи сыснасем пурте ăратлă. Акă, сăмахран, „Машка“ йатлă сысна ами 16 пăт туртать. „Лиза“ пĕре çурăлана чухнех 19 çура, „Волк“ 23 çура туса пачĕç. Ку шутран 4 кăна вилнĕ. Ыттисем пурте сывах пурăнаççĕ.

Фермă кăçалхи çул государствăна памали аш-какай планне тултарнă. 1939 çулшăн аванс шучĕпе 18 центнер панă.

Сысна ферми выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана 251 проц. тултарнă.

Д. Михайлăв.

Фермăран пысăк тупăш

Истĕрне районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозри сĕт-çу ферми пысăк тупăш паракан пулса пырать.

1933 çулта фермăра пĕтĕмпе те 28 пуç ĕне выљăх анчах пулнă. Фермăра ĕçлекенсем ĕнесене зоотехникăпа ветеринари кăтартнă пек пăхнипе выљăхсен хисепне ÿсме пулăшаççĕ. Халљ ĕнтĕ фермăра 87 ĕне шутланать. Ку шутран 57 ĕне красногорбатовски ăратлисем.

Фермă ÿсеç тата выљăхсем ăратланса пынă майĕпе, ĕнесем ытларах сĕт паракан пулаççĕ. „Динамо“, „Норка“ тата „Картинка“ йатлă ĕнесем вăтам шутпа талăкра 18—20-шер литр сĕт параççĕ. Иртнĕ çулта фермă вăтам шутпа кашни ĕнерен 2 280-шер литр сĕт суса илнĕ.

Фермă тупăшĕ те çултан çулах ÿсет. 1935 çулта фермă колхоза 25 пин тенкĕ тупăш панă пулсан, 1938 çулта 8 уйăх хушшинче фермăран 32 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Фермăра 65 çулхи Лаптĕв стахановла ĕçлет. Вăл пăхакан „Дракон“, „Њурка“ йатлă пăрусем тата ыттисем те талăкра пĕр килограм йе килограм çура таран хушăнса пыраççĕ.

Фермă государствăна сĕт-çу памали обйазательствăна тултарнă, çитес çулшăн та параççĕ.

Ник. Цветков.

Уйа торф тата тислĕк кăлараççĕ

Нишерти „КИМ“ колхозăн (Куславкка р.) уйхир бригадисем çитес çуракине лайăх хатĕрленессишĕн, тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртăва тухрĕç. Халĕ ăмăрту договăрĕсем çине кĕртсе хăварнă пунктсене пурнăça кĕртме тытăнчĕç. Декабер уйăхне кĕнĕренпе колхозри бригадăсем пурĕ 890 лав торф, 135 лав тислĕк уйа кăларнă. Йалхуçалăх машинисене йусаса пуçтарса лартнă.

А. Зайцĕв.

Парти тата государствă дисциплинине пăсакансене партире тытмала мар

Декабрĕн 7-мĕшĕнче пулнă хăйĕн ларăвĕнче ПСК(б)П Тутаркас райкомĕ райкомăн укçа-тенкĕ хуçалăхне тĕрĕслевĕ актине пăхса тухрĕ. Çак акта сÿтсе йăвнă чухне питĕ пысăк çитменлĕх палăрчĕ. ПСК(б)П райкомĕнче управделами пулса ĕçленĕ Проворăв тĕрлĕ майсемпе сăтăрлă ĕçсем тунă. Унăн сăтăрлăхне тупма питĕ йăвăр пулнă, мĕншĕн тесен ревизи комиççисем кашни ревизирех укçа-тенкĕ шутне тĕрĕс кăларса пынă. Парти Чăваш Обкомĕн бухгалтерĕ Семенăв йулташ райкомăн укçа-тенкĕ хуçалăхне пĕр уйăх ытла тĕрĕсленĕ.

1937 çулта нумай расхутланă пек туса 8.004 тенкĕ укçана пытарса хăварнă. Çак шутран 1937 çулхи займшăн тесе 500 тенкĕ перекет кассине тÿлесе Проворăв хăй илнĕ. Мăн-Сĕнтĕрти столовăй счочĕ çине 3.125 тенкĕ, йалти кооператив счочĕ çине 1 108 тенкĕ, бензин çунтарнă тесе МТС счочĕ çине 3 500 тенкĕ куçарнă. Кунсăр пуçне Проворăв тĕрлĕ улталлă майсемпе укçа нумай илнĕ. Тĕслĕхрен, 1937 çулти декабрĕн 9-мĕшĕнче вăл 1 000 тенкĕ, декабрĕн 26-мĕшĕнче вăрçăла турăсăрсен союзĕн курсне ирттерме тесе 2 292 тенкĕ илнĕ. Çакăн пек майсемпе вăл парти укçине 4020 тенкĕ хăй кĕсйине чикнĕ. Çакăн пек жуликла ĕçленĕшĕн Проворăва ПСК(б)П членĕнчен кăларас тесе йышăнчĕ ПСК(б)П райкомĕ. Анчах та кунта айăпли пĕр Проворăв çеç мар. Проворăва жуликла ĕçсем тума пулăшакансем айакка тăрса йулаççĕ. Çавăнпа та парти райкомĕ ПСК(б)П Тутаркас райкомĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ Ивановпа Зубковăн партилĕхĕ çинчен пăхса тухма ПСК(б)П Шупашкар хула комитетне пĕлтерес терĕ. Пирĕн шутпа иртнĕ 1937 çулта В. Т. Иванова партирен кăларни тĕрĕс пулнăччĕ, анчах парти Чăваш Обкомĕнче ларнă тăшмансем ăна каллех партине илнĕ. Иванов райком çекретарĕ пулнă чухне райком *инструкторĕсене* ĕçукçи сахал, *командировка* укçине кирлĕ таран паман, *тытса йулнă*. Государствă укçине жуликле майсемпе илсе хăйне валли Иљинкăра пысăк пÿрт лартнă. Вăлах 2000 тенкĕ укçа илме тăнă, анчах банк паман. Районри интеллигенципе тачăн ĕçлес вырăнне, учитĕлсене ним айăпсăр пачки-пачкипе ĕçрен кăларнă. Самокритикăна хĕснĕ. Çултан çул усă курмасăр йулнă укçăна тепĕр текущи счот çине куçарса хăйсене майлă усă курнă. Çавăнпа та ăна парти райкомĕн çекретарĕнчен кăларнă хыççăн, вăхăтлăх 1-мĕш çекретар пулса йулнă Зубков та Иванов пек ĕçлеме тытăннă. 1937 çулта усă курса пĕтермен укçана ытти учрежденисен текущи счочĕ çине куçарма пикенет. Çавăнпа та государствă тата парти дисциплинине пăсакан Ивановпа Зубков партире тăма пултарас мăшăва тепĕр хут пăхса тухмала. Парти тата государствă дисциплинине пăсакансем, жуликле ĕç тăвакансем валли большевиксен парти ретĕнче вырăн пулмала мар.

Бирÿков.

Майорăв çемйин концерчĕ

Декабрĕн 6-мĕшĕнче Аманикри колхоз клубĕнче (Куславкка р.) Майорăв колхозник çемйи концерт пачĕ. Майорăв çемйинче 4 çын хĕлĕхлĕ музыка хатĕрĕсемпе чылай йурăсем выљăса кăтартрĕç.

Колхозниксем концерта ырларĕç.

Й. Чернов.

„Серп и Молот“ (Мускав) савăтри оборонă ĕçĕ. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Тир инструкторĕ В. Д. Пузин савăтри çамрăк рабочисемпе работницăсене Дегтярев системăллă пулемет чăçĕсене вĕрентет. А. Грибовски фотоÿкерчĕкĕ (Бюро-клише ТАСС).

Учитĕлсене аттестацилес ĕçĕн малтанхи итогĕсем

Чăваш республикинче учитĕлсене аттестацилес ĕç вĕçленсе пырать.

Аттестаци тăвас йĕнĕпе ĕçлекен улта комиççирен хăйсен ĕçне тăваттăмĕшпе (комиççи председателĕ И. К. Терентйĕв йулташ) пиллĕккĕмĕш (председателĕ Т. Д. Данилăв йулташ) комиççисем ăнăçлăн тата йĕркелĕн вĕçлерĕç.

Аттестаци ĕçĕ, унта чылай çитменлĕхсем пулнă пулин те, республикăри шкулсен пурнăçне пысăк усă кÿчĕ. Аттестаци халăх учитĕлĕн авторитетне татах та çÿлерех çĕклерĕ, педагогăн хăй ĕçĕнчи ответлăхне хăпартрĕ, темиçе çĕршер учитĕле куллен йĕркелĕн вĕренсе пыма, хăйĕн политикăла, културăла тавракурăмне анлăлатассишĕн, педагогикăла ăсталăхне ÿстерессишĕн çине тăрса, тимлĕн ĕçлеме хавхалантарчĕ. Çутĕç органĕсене аттестаци ĕçĕ кадрсене лайăх пĕлсе тăма хушрĕ, çутĕç органĕсене йерттсе пыракансене шкулсем патнерех çывхартрĕ. Аттестаци вăхăтĕнче пирĕн шкулсем учитĕл ĕçне ăнсăртран йе ултавпа лекнĕ çынсенчен тата чылай тăшмансенчен хăтăлчĕç.

Вырăнсенчи аттестаци комиççисем хăйсен ĕçне вĕçлесе пынипе те пире малала лăпланса лармалла ирĕк памасть.

Райсыссем тăрăх ĕçлекен аттестаци комиççийĕсенчен улттăмĕш комиççи (председателĕ И. Г. Гаврилăв—Çутĕç Халăх Комиссариачĕн инспекторĕ) хăйĕн ĕçне уйрăмах тăсса пырать. Тĕрĕссипе каласан, вăл пайанхи куна çитсе те аттестаци ĕçне тивĕçлипе тытăнман. Çавна пула Шупашкар, Ишлей тата Тутаркас районĕнчи учитĕлсем халĕ те аттестатсем илмен.

Пуçламĕшпе туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчи пĕр çултан кайа мар ĕçленĕ учитĕлсем пурте аттестаци витĕр тухмала.

Ку ĕç вăраха йулса пынине нимĕнле сăлтавпа та тÿрре кăларма çук. Аттестаци комиççисенчи хăшпĕр *бÿрократсене* пула çеç уйрăм учитĕлсем аттестатсем илеймесĕр йулаççĕ. *Сăмахран, Чатукасси пуçламĕш шкулĕнчи Е. Т. Волкăва* учитĕлницă, шкул ĕçĕнче 36 çул ĕçленĕскер, иккĕмĕш çул ĕнтĕ аттестат илеймест.

Чăваш республикинче, тĕрлĕрен сăлтавсем çине тÿнтерсе, аттестат илмели ĕçсене 236 учитĕлне йĕркелемен: вĕсенчен пуçламĕш шкулсенчи учитĕлсем 115 çын, туллимар вăтам шкулсенчисем 77 çын, вăтам шкулсенчисем 44 çын халĕ те аттестатсем илеймесĕр пурăнаççĕ. Районсемпе хуласенчи çутĕç пайĕсен çав учитĕлсен ĕçĕсене халех пăхса тухмала, аттестат илме тивĕçлисене аттестатсем памала.

Халăхи вăхăтра шкулсенче ĕçлекен уйрăм учитĕлсене, вĕсем кирлĕ таран вĕренсе педагогикăлă пĕлÿ илеймен пирки, правила тăрăх, учитĕл йатне памаççĕ. Вĕсене аттестаци комиççисем ĕçрех хăварса, вăтам шкулсенче ĕçлекенсене—аслă шкул, пуçламĕш шкулсенче ĕçлекенсене вăтам шкул вĕренсе пĕтерме кăтартса параççĕ. Çакнашкал учитĕлсен хисепĕ Чăваш республикинчи учитĕлсен çурĕнче çуррине йахăн шутланса тăрать. (Вĕсем пĕтĕмпе 2 529 çын, вĕсенчен пуçламĕш шкулсенче—684 çын, туллимар вăтам шкулсенче—1 535 çын, вăтам шкулсенче 310 çын).

Çак учитĕлсене вĕренсе çителĕклĕ таран пĕлÿ илме пулăшасси—çутĕç органĕсен чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Çавăнпа та заочнă вĕренес ĕçе уйрăмах лайăх йĕркелемеле, заочниксен йышне куллен ÿстерсе, çирĕплетсе пымала, заочнă вĕренĕвĕн пахалăхне хăпартмала.

Шкулти вĕрентÿпе воспитани ĕçĕ йĕнĕпе аттестаци материалĕсем—шкул ачисем вĕренÿре халĕ те кайа йулса пынине кăтартса параççĕ. Вĕренекенсем уйрăмах вырăс чĕлхипе начар ĕлкĕрсе пыраççĕ, классем тăрăх илсен, вĕренÿ пахалăхĕ 5-мĕшпе 8-мĕш классенче питех те айалта тăни палăрать. Сăмахран, Çĕмĕрлери 2-мĕш номĕрлĕ шкулта вĕренÿре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 66 процент шутланать. Ку шкулти уйрăм классенче (8-мĕш „Б“ клас) вĕренÿре кашни çĕр ачаран 49 ача çеç ĕлкĕрсе пыраççĕ. Хăшпĕр предметсемпе (биологипе—преподавателĕ Йегорăвă, географипе—преподавателĕ Ногайĕвă, нимĕç чĕлхине—преподавателĕ Фĕдăрăв) кашни çĕр ачаран аллăшĕ ĕлкĕрсе пыраймаççĕ.

Ачасем вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймани çак сăлтавсенчен килет. Учитĕлсемпе вĕренекенсем хушшинче политикăла воспитани ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Учитĕлсем вĕренÿре планлă методикăлă ĕçе тĕп вырăна хуман. *Районри тата хулари çутĕç пайĕсем шкулсен* ĕçне тимлĕн тĕрĕслесе учитĕлсене пулăшса пырас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Учитĕлсем ачасен ашшĕ-амăшĕсене шкул пурнăçне йапăх хутшăнтараççĕ тата ыт. те.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн учитĕлсене аттестацилес ĕçе тĕплĕн туса çитермеле, аттестаци комиççисем пухнă материалсене пăхса тухса кирлĕ вывăдсем тумала. Учитĕлсен те хăйсене панă кăтартусене çине тăрса пурнăça кĕртмеле. Парти историйĕн Кĕске курсĕ тăрăх большевисăма вĕренесси, педагогикăлă ăсталăха тата çÿлерех çĕклесси—учитĕлсен пайанхи тĕп задачи пулса тăрать.

И. Сапожникăв.

ЛИТЕРАТУРӐ страници

Н. Илбек

ЙУТ ҪЫН

(Калав)

Штаб приказне ӗҫе кӗртнӗ те Михайлӑв хӑйсен чаҫне таврӑнать. Хурӑнлӑх хушшипе анатала анакан тӑвӑр сукмак ӑна тӗрлӗ май авкалантарса йертсе кайать: пӗрре чӑтӑха кӗрет вӑл, унтан йӳҫлӗхри хӑмӑш хӗррипе иртсе уҫланка тухать, йе пӗр сӑрт ҫине улахать те унтан ансан тепӗр сӑрт ҫине хӑпарать. Сарт ҫинчен сайра вӑрман урла инҫетри йалсемпе уйрӑм пӳртсем курӑнаҫҫӗ. Вӗсен ҫийӗ каҫхи лӑпка ҫанталӑкра мамӑк пек шурӑ тӗтӗмпе карӑннӑ.

Сукмак пӗр ҫырма хӗррипе йертсе пычӗ. Ҫак ҫырмана ҫитсен Михайлӑв хӑйсемпе кӳршӗлӗ колхозри пӗр старик иртнӗ кунсем ҫинчен каласа панине аса илчӗ. [illegible] Ҫулахи тӑр уйӑр кунхине буденнӑвӗҫсем ҫак ҫырма хӗрринче учӗсене кантарма чарӑннӑ. Хӗрлӗ йулӑнутҫӑсем шыва кӗме шутланӑ. Кӗпи-йӗмӗсене хывса шыва кӗмешкӗн ӗлкӗрнӗ ҫеҫ, вӑрман йенчен шур полякӗсем кӑткӑ пек кӗшӗлтетсе тухнӑ. Хӗрлӗ конниксемпе тӗл пуласси ҫинчен шутламан та вӗсем. Шур полякӗсене асӑрханӑ буденнӑвӗҫсем шывран чӗр самантра сиксе тухнӑ та хӗҫпӑшалӗсене тытса нимӗн шиклеҫсе тӑмасӑр тӑшман ҫине аҫа-ҫиҫӗм пек вирхӗннӗ. Кӗпе-йӗм тӑхӑнса тӑрса та вӑхӑт иртермен. Шур полякӗсем хӑйсен патнелле вӗҫсе пыракан ҫарамас йулӑнутҫӑсене курсан нимӗн тума пӗлмесӗр анӑраса тӑнӑ. Ик-виҫӗ минут хушшинче шур полякӗсене аркатса тӑкнӑ ҫавӑн чух. Йулӑнутҫӑсен аллинчи ҫап ҫутӑ хӗҫсем вутлӑ-хӗмлӗн ҫуннӑ пек йалтӑртатса выляннӑ. Ӗмӗрне асран кайми кун, тенӗ старик, ҫав вӑхӑта аса илсе.

Тӗттӗм пулчӗ. Тӳпере ҫӑлтӑрсем курӑнчӗҫ. Каҫ сулхӑнӗ ӳт-пӗве ҫӑмӑллӑн кӑтӑклаcа ҫӳҫентерет. Паҫартарах инҫетрен-инҫетрен йытӑ вӗрни илтӗнетчӗ, часах вӑл та шӑпланчӗ. Чӗмсӗр тӗлӗрет вӑрман.

Ҫак самантра сасартӑк уйран инҫех те мар типӗ туратсем хуҫӑлни илтӗнчӗ. Михайлӑв ҫултан пӑрӑнса йӑвӑҫсен хушшине кӗчӗ. Вӑл йӗри-тавра ҫаврӑнса пӑхрӗ, нимӗн те курӑнмасть. Кайӑксем чӑштӑртатни ун пек илтӗнмелле мар, такам ури сасси пулчӗ пулӗ тесе чӗрне вӗҫҫӗн утса пырса тункатта хыҫне пӗшкӗнсе выртрӗ. Вӑхӑт нумай иртмерӗ. Сулахай йенчерех пӗр пилӗк-ултӑ ура пусӑмӗнче пӗр ҫын утса пырать. Шӑпах вӑл тунката умне ҫитсе пынӑ чух Михайлӑв ура ҫине тӑчӗ.

— Харатрӑн тупата!—терӗ йут ҫын кӑмӑллӑн кулкаласа. Вара каллех хӑвӑрттӑн:—Сывлӑх сунатӑп, тӑванӑм, ӑҫта васкатӑн каҫхи ҫулпа?—тесе ыйтрӗ. Михайлӑв уҫӑлса ҫӳреме тухрӑм тесе ӑнлантарчӗ, тӗл пулнӑ ҫын ӑна нумай сӑмахсемпе чӑрмантарса тӑрас мар пек пулса хыҫалала пӑхсах малала утрӗ.

— Чимӗр-ха,—терӗ Михайлӑв,—Есӗр ӑҫта кайатӑр?

— Хулана.

— Кӑтарт-ха документсене,—терӗ Михайлӑв уҫҫӑн.

— Мӗне?

— Документсене кӑтарт-ха тетӗп.

Старик пиншакӗн шалти кӗсйинчен пӗр ывӑҫ хутсем кӑларса Михайлӑва тыттарчӗ.

[illegible] хӑтра старик унта-кунта пӑхкаларӗ, пӑркаланса илчӗ, аллипе тарланӑ ҫамкине шӑлнӑ пек туса Михайлӑв куҫне тусан пек тапак вӗҫтерчӗ.

— Ай!—тесе кӑшкӑрса йачӗ те Михайлӑв куҫне кӑштах шӑлса илсен уҫса пӑхрӗ. Старик хӑталтӑм тесе савӑннипе ҫаврӑнса пӑхмасӑр тарчӗ. Михайлӑв куҫне шӑлашӑла тӑшман хыҫҫӑн чупрӗ. Старик вӑрмантан тухсан ҫырма тӑрӑх чупса пыгаима ӗмӗтленнӗ пулас,—колхоз йӗтемӗ патне пырса тухнине ниепле те тавҫӑрса илеймерӗ. Колхоз йетемӗ ҫырма хӗрринчи сӑрт ҫинерех вырнаҫнӑ. Унта ҫалман капансем пайтах. Старик ҫавсен хушшинерех кӗрсе хӑталасшӑн пулнӑ мӗн.

Йӗтем хӗрринчи курӑк хушшине кӗрсен Михайлӑв тата тепӗр хут сикрӗ те, старике ӗнсинчен йарса илчӗ. Ывӑнса ҫитнипе иккӗшӗ те ҫӗре талпӑнса ӳкрӗҫ. Мӗнле ӳкнӗ пекех час ура ҫине те тӑчӗҫ.

Ҫав вӑхӑтрах вӗсем патне йӗтем хуралҫи те ҫитсе тӑчӗ. Красноармеҫ умӗн утма килӗшмен старик тытӑҫса та пулин хӑтӑлма шутларӗ. Хуралҫӑ йут ҫыннӑн кинжаллӑ аллине хыҫал йенне пӑрса хирӗнтерчӗ. Старик парӑнчӗ.

Уйӑх вӑрман ҫинелле ҫывхарчӗ. Михайлӑв ҫак палламан ҫын ҫинчен кӑштах каласа парса хуралҫа тӗлӗнтерчӗ. Ҫакӑн пек ирсӗр ҫын ҫине ҫиллине шӑнарайманӑр хуралҫӑ старике сухалӗнчен йарса тытрӗ ҫеҫ—кӗреҫе пек тӑваткал ытарайми катра сухал хӑйпӑнчӗ те ӳкрӗ.

— Е-е, стари-и-ик!.. Вӑхӑтсӑр ватӑлнӑ-ҫке есӗр... Еккейе... йашунтармӗш... е-е!?—терӗ йӗтем хуралҫи, хӑйне хӑй хавхаланса.

Белоруҫҫи, 1938 ҫул.

Аркадий Ӗҫхӗл

Тарӑн рейд

(Пулас вӑрҫӑн уйрӑм картинисем)

Кулленхи тӳпере
Кулленхи ҫӑлтӑрсем йалкӑшаҫҫӗ.
Ҫуталать чиперех
Уйӑх ҫутӑ таса ҫӗршыв каҫӗ.

Халлапри улӑп пек,
Чикӗре тӑрать хӗрлӗ хуралҫӑ.
Анчах ҫутӑ тӳпе
Пӗр тӗлте тӗксӗмленчӗ, хуралчӗ...

Килсе тухрӗ тӑшман,
Вӑл пуҫлап терӗ пулӗ сасартӑк.
Анчах епӗр шанман
Нимӗнле ырӑ лапьӑ каҫа та.

Нихӑҫан лӑпланман,
Ӗненмен нимӗнле шӑплӑха та.
Епӗр тӑнӑ йалан,
Йалан тӑнӑ сыхӑ та хатӗр.

Акӑ вӑл, хашкаса,
Вӗҫсе ҫитрӗ фашисӑм хӗлачӗ.
Ҫухалмасӑр, часах,
[illegible]

[illegible]
пур йенчен,
тӑвӑлри ҫиҫӗм пек,
Истребителсем пирӗн ҫӗкленчӗҫ.
Тасалтӑр!
Пӗттӗр урнӑ фашисӑм тӑхлан
пуҫӗпех,
Хыпса ҫунтӑр сасартӑк.

Сывлӑшра ҫапӑҫу.
Тӑшман пурнӑҫ ыйтать.
Анчах ҫак хушӑра,
ҫӗр ҫӗмрен ҫавра-ҫил пек,
Пирӗн бомбовозсен ескадрилйӗ
Тухса вӗҫкӑнчӗ тарӑн рейда.

Вӑрҫӑ ҫулӗ ҫинчи мӗн пур крепӑҫсене.
Пур хура вӑйсене тӳнтерсе йӑлӑнҫийлӗн
Ҫитрӗ пирӗн хайар ескадрилйӗ
Тӑшмансен тӗп хулийӗ ҫине.

Вӑл кӗтмен, вӑл выртать сарӑлса ҫаплипех,
Ӗҫкӗ хатӗрӗсем лартса тухнӑ сӗтелӗн,
Акӑ вӑл кисренет хаљ аҫа ҫапнӑ пек—
Ҫын ҫийӗн тискерсен цитаделӗ.

Тӗпӗнчен чӗтренет вутпа хыпӑннӑ каҫ.
Тӑшман чӑрсӑр сикет, йулашки хут вӑл урнӑ.
Пуҫпа-пуҫ хире-хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫас
Ирсӗр вилӗмпеле аслӑ пурнӑҫ.

Ҫӗнтерет аслӑ пурнӑҫ.
Таптанать ирсӗр вилӗм.
[illegible]
[illegible]
[illegible]
Паттӑр тарӑн рейдран таврӑнать.

Ескадрилйӗ килет тӗнче урлӑ.
Йалавсем вӗҫтерсе.
Ҫӗнтерӳлӗн йурлаҫҫӗ пӗр йурӑ
Ҫынсемпе моторсем.

Сивӗнми ҫӑлтӑрсем йалкӑшаҫҫӗ
Тутӑхми тӳпере.
Уйӑх ҫутнӑ таса ҫӗршыв каҫӗ
Ҫуталать чиперех.

Пурӑнма питӗ аслӑ та ирӗк
Ман тӑван ҫӗршыва.

Ескадрилйӗн маттур командирӗ
Ывӑлне чуптӑвать.

Литкружоксенче

КӲКЕҪ. Нумай пулмасть кунти литкружок членӗсем Чӑвашрадиокомитет студийӗ урлӑ хӑйсен произведенийӗсене вуласа пачӗҫ. Йулашки вӑхӑтра литкружок членӗсен пултарулӑхӗ самайах ӳсни сисӗнет. Вӗсен произведенийӗсем районри тата республикӑри хаҫатсенче, журналсенче те пичетленсе пыраҫҫӗ.

Д. Е.

ТУРХАН. Аслӑ Арапуҫӗнчи вӑтам шкул ҫумӗнчи литкружок ӗҫтеиӗ хаҫачӗ кӑларма пуҫларӗ. Хаҫатра кружок членӗсен сӑввисем тата пӗчӗк калавӗсем пичетленеҫҫӗ. Ку хаҫатпа шкул ачисем ҫеҫ мар, колхозниксем те интересленеҫҫӗ.

Н. ГОРШКОВ.

ҪӖРПӲ. Йӗкӗрварти вӑтам шкул ҫумӗнчи литкружок членӗсем вырӑссен аслӑ писателӗ И. С. Тургенӗв пултарулӑхӗпе паллашрӗҫ. И. С. Тургенӗвӑн хӑшпӗр калавӗсене литкружок членӗсем чӑвашла куҫарнӑ.

М. Иванов.

Чӑвашла произведенисене вырӑс чӗлхи ҫине куҫараҫҫӗ

Халиччен чӑваш писателӗсемпе поечӗсен произведенийӗсем вырӑсла питӗ те сахал пичетленсе тухнӑ. „ССРС-ти халӑхсен творчӗстви" альманах редакцийӗ кӑҫалхи ҫулӑн пуҫламӑшӗнче чӑваш литературин лайӑх произведенийӗсене вырӑс чӗлхи ҫине куҫарса альманаха кӗртме палӑртни ҫинчен ҫырса пӗлтерчӗ. Чӑваш писателӗсем ку хыпара пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илчӗҫ хӑйсен произведенийӗсене куҫарас ӗҫе активлӑн пуҫӑнчӗҫ. Халӗхи вӑхӑтра ку ӗҫ ӑнӑҫулӑн вӗҫленнӗ тесе шутлама та пулать. Альманахра С. Елкер, Уйӑп, Ӗҫхӗл, Ухсай, Йанкас, Усли, Ивник, Иван Мучи, Чулкаҫ, Тукташ, Митта Петӗрӗ, Алка, Малкай произведенийӗсем пулаҫҫӗ.

И. Родин

ПОЕТ ЙАЛӖНЧЕ

Йалсоветне колхозниксем ӗҫ ҫинчен канашлама пуҫтарӑннӑ. Чере̄тре питӗ те кирлӗ ыйту: халӗхи вунӑ класлӑ шкул ҫурчӗ ачасене тавӑртарах, пысӑк ҫурт лартас пирки калаҫса татӑлмала. Тата гостиницӑ та кирлӗ. Ку йала кунсеренех темиҫешер ҫын килеҫҫӗ, вӗсене чарӑнмали уйрӑм ҫурт ҫук. Паллах, кашни колхозник хӑйсем патне хватере йараҫҫӗ вӗсене, тутлӑ апатлантараҫҫӗ, ҫывӑрма выртнӑ чух мамӑк тӳшексем сарса параҫҫӗ. Ҫапах, культурӑлӑ йала гостиницӑсӑр килӗшместех ӗнтӗ.

Шевченково йалӗнче (ӗлӗк вӑл йал Кириллӑвкӑ йатлӑ пулнӑ) поетӑн тӑванӗсем сахал мар. Вӗсенчен нумайӗшӗ Шевченко хушаматлӑ. [illegible] всляшше-асламӗшӗсем аслӑ поетпа тӑван йе пӗр ратнере пулни ҫинчен калаҫҫе—пурте вӗсем йуратнӑ поетӑн чи ҫывӑх ҫыннисем пуласшӑн тӑрӑшаҫҫӗ, хӑйсен аслӑ землякӗпе тивӗҫлӗн мухтанаҫҫӗ.

Шевченково йалӗнче виҫӗ колхоз: „Хӗрлӗ шурампуҫ", „Ударник", „Хӗрлӗ партизан". Ку колхозсем пурте питӗ пуйан та культурӑлӑ пурнӑҫпа пуранаҫҫӗ. Пӗтӗм округӗпе чи мухтавлӑ вырӑнсенчен пӗрне йышӑнаҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫул уйрӑмӑнах сахӑр кашманӗ ҫавтери ӑнса пулнӑ. Амбарсенче тулли йех ҫӗнӗ тырӑ, кладовойсенче иртнӗ ҫултан йулнӑ ытлашши тырӑ сыхланать. Кашни колхозник хуҫалӑхӗнчех ӗне, пӑрусем, сыснасем тата шутсӑр нумай чӑх-чӗпсем.

Йал кунсеренех пуйанланать, чечекленет, кунсеренех хӑйӗн сӑн-сапатне ҫӗнӗ постройкӑсемпе илемлентерет. Халӗ 200 килӗ ытла тимӗр йе черепиҫӑ витнӗ ҫӗнӗ пӳртсем лараҫҫӗ. Ӗлӗк чиркӳ пулнӑ пысӑк ҫуртра—йалхуҫалӑх шкулӗ. Йалта телеграф та, телефон та пур, библиотекӑ, пульницӑ, аптекӑ, ача йаслисем 10. Кашни килерех електричӗствӑ лампӑчки ҫунать.

Ӗлӗк ку йал, таврари ытти йалсем пекех, генерал-губернатӑр Вас Енгельгард аллинче тӑнӑ. Вӑл хресченсене вылӑх вырӑнӗнче усранӑ: укҫала сутнӑ вӗсене, картла вылйаса йанӑ, ачасене ашшӗ-амӑшӗсенчен уйӑрнӑ, тӳсме ҫук йӑвӑр ӗҫлеттерсе крепостла хресченсене ӗмӗрлӗхе вӑхӑтсӑр куҫ хуптарнӑ.

Поет хӑй пурӑннӑ пӳрт вырӑнӗнче халӗ унӑн бӳстне лартса хунӑ. Бӳст вырнаҫса ларакан пйедестал ҫине „Ку вырӑнта Тарас Шевченкӑн пӳрчӗ пулнӑ" тесе ҫырса хунӑ.

Ҫамрӑк Шевченко хӑйӗн амӑшӗн час-часах тарса пыганнӑ подвал халиччҫенех сыхланса усранать-ха. Йал ҫыннисем поетӑн ҫамрӑклах вилнӗ тӑван амӑшӗн вилтӑпри тӗлне те кӑтартаҫҫӗ.

Шевченко музейӗ вальӗи пысӑк та питӗ илемлӗ ҫурт ҫак ҫитес кунсенчех туса пӗтереҫҫӗ.

...Аслӑ урампала ҫӑмӑл машинӑ хӑвӑрттӑн вӗҫтерсе пырать. Бульвартан иртрӗ те вӑл, площӗте чарӑнчӗ. Кабинӑран пӗр старик тухрӗ. Ӑна поет йалӗпе паллашма килнӗ ҫынсем паҫӑртанпах кӗтеҫҫӗ, вӑл—аслӑ поетӑн халиччҫенех пуранакан пӗртен-пӗр современникӗ. Акӑ вӑл килнӗ ҫынсемпе пӗрле утса бульвара кӗрет. Бульвартра аслӑ поетӑн памӗтникӗ ҫӗкленсе тӑрать. [illegible] колхозниксем, Терешченко рабочин пройекчӗ тӑрӑх, хӑйсен вӑйӗпе лартнӑ.

Машинапа килнӗ старике Саккий Иванӑвич Маломуж тесе чӗнеҫҫӗ. Вӑл халӗ 98 ҫула ҫитнӗ. Вӑл крепосла пурнӑҫра хӑй пурӑнса курнӑ, асӑнма хӑрушӑ хурлӑхсем тӳссе иртернӗ. Унӑн ӗлӗкхи пурнӑҫа сӑнласа паракан калавӗсем чун-чӗрене ҫавтери ҫӳҫентереҫҫӗ. Халӗ Саккий Иванӑвич питӗ те канлӗн пурӑнать. Хӗрӗ ун—пуйан колхозницӑ, ывӑлӗ Ленинградра вӗренет.

Пӳртре лӑпкӑ, аван. Саккий Иванӑвичӑн кӗрӳшӗ, тин ҫеҫ уйран килнӗскер, репетицине кайма тумланать: йалти драмкружок спектакль лартма хатӗрленет мӗн. Хӗрачи Шевченкӑн „Катеринӑ" поемине пахса ларать, ку поемӑна колхоз вечӗрӗнче вуласа пама хатӗрленет вӑл.

Тарас Шевченко йалӗнче халӗ хутла пӗлмен ҫын, питӗ те ваттисене шута илмесен, пӗрре те ҫук. Колхозник ачисем совет интеллигенцин ҫарне ҫулсерен ӳстереҫҫӗ. Шевченко йалӗ пирӗн ҫӗршыва 138 учителӗ, 94 агроном, 15 инженер, 10 врач панӑ. Университетсенче, институтсенче, техникумсенче 380 ҫамрӑк вӗренеҫҫӗ. Ку йалтан 32 шофӗр, 61 трактӑрис тухнӑ.

Кашни килте тенӗ пекех Шевченко портречӗ тата „Кобзарь" кӗнеке. Йалти поет, колхозник Иван Олейник „Жив Тарас и будет жить" йатлӑ сӑвӑ ҫырнӑ. Ку сӑвӑри сӑмахсене йалти педагог-комсомолеҫ Микола Сикороко музыкӑ ҫине хунӑ. Ку йурра халӗ пӗтӗм йалӗпех йурлаҫҫӗ. Каҫсенче клуба пуҫтарӑнаҫҫӗ. Хор йурлать. Ҫамрӑксем ташлаҫҫӗ. Ватӑраххисем шашкӑла выляҫҫӗ, ҫамрӑксем Ҫамрӑк Шевченко хӑйӗн амаҫу-ҫине пӑхса савӑнаҫҫӗ.

Ӳсӗм ҫулӗ ҫинче

Чӑваш литературин кӑҫалхи ҫул—чылайах пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе вулакансемшӗн паллӑ. Ҫав ҫитӗнӳсем ытахальтен килмен. Вӗсене, чи малтанах, литературӑри ылханлӑ тӑшмансемпе вӗсен йулашкийӗсене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешсе, писателсен коллективне кунсерен ҫирӗплетсе пырса, сӗнӗрен-ҫӗнӗ пултарулӑ вӑйсем хутшӑнтарса, ҫав вӑйсене активлатса пырса тунӑ.

Литературӑри тӑшмансемпе вӗсен хӳрешкисен ӗҫри чи ирсӗр метӑчӗсенчен пӗри вӑл — ӳсекен ҫамрӑксене пур йенчен те чӑрмантарса пырасси, писателсен организацине литературӑри ҫамрӑксен шучӗпе ӳсме чарса лартасси пулнӑ. Ҫамрӑк автӑрсен алҫырӑвӗсене критиклем пекки туса, вӗсем тивӗҫсӗр пӑрахӑҫа кӑларнӑ йе, ирсӗррӗн икӗпитленсе, куҫ умӗнче тивӗҫсӗр ырланӑ, куҫ хыҫӗнче—ҫӗрти ҫӳп вырӑнне хунӑ.

Ҫак киревсӗр метӑда тӑрӑ шыв ҫине кӑларма писателсен коллективӗн кӑҫалхи ҫул нумай вӑй хумала пулчӗ. Халӗ ӗнтӗ епӗр ҫамрӑк автӑрсемпе ӗҫлесси тӗпренех улшӑнса ҫӗнелчӗ тесе уҫӑмлӑнах калама пултаратпӑр. Ҫамрӑксене консультаци парассипе вӗсен йурӑхлӑ алҫырӑвӗсене вӑхӑтра пичетре кӑларса пырас пирки журналсемпе хаҫатсен редакцийӗсем кӑҫалхи ҫул нихҫанхинчен те ытларах тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ, ӗҫлеҫҫӗ те. Ҫавна кура ҫамрӑк автӑрсен активлӑхӗ кунсеренех ӳсет. Йулашки вӑхӑтра ҫеҫ литературӑ ӗҫне пуҫӑннӑ ҫамрӑксем ҫамайах аван очӗрксем, калавсем, сӑвӑсем пачӗҫ. Ҫамрӑк автӑрсен произведенийӗсенчен хӑшӗсем кӑҫал пулса иртнӗ конкурсенче премисем илме те тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Йурӑхлӑ произведенисем ӗнтӗ нумай. Вӗсен хушшинче пысӑккисем те (хаҫатсенче йе „Сунтал" йевӗр ҫӳхе журналсенче шӑнӑҫма пултарайманнисем) пур. Хулӑнрах журнал, уйӑхра йе икӗ уйӑхра пӗрре тухса тӑракан альманах ҫукки ӳсекен автӑрсемшӗн пит пысӑк чӑрмав пулса тӑрать. Ку журнала кӑларас пирки чӑваш писателӗсен союзӗ умне темиҫе хутчен лартнӑ ыйтӑва усӑлӑн татса пама вӑхӑт ҫитнӗ ӗнтӗ тахҫанах.

Литературӑри тӑшмансемпе вӗсен хӳрешкисен ӗҫри чи ирсӗр метӑчӗсенчен тепри вӑл — халӑх хушшинчи йурӑҫисемпе йумахҫӑсен ӑстисем ҫине йӗрӗнсе пӑхасси, писателсен организацине чунтан-чӗререн халӑхпа ҫыхӑнса тӑракан сӑмах маҫтӑрӗсен шучӗпе ӳсме чарса лартасси пулнӑ. Халӑх йурӑҫисенчен сахал мар кулнӑ вӗсем, мӑшкӑланӑ; халӑх йурӑҫисен алҫырӑвӗсене икшер-виҫшер ҫул нимӗн ответсӑр выртарнӑ йе пӗтӗмпех сухатнӑ.

Паллах, ҫак киревсӗр метӑда тӑрӑ шыв ҫине кӑларас тесе те писателсен коллективӗн кӑҫалхи ҫул нумай ӗҫлемелле пулчӗ. Литературӑри ватӑ йулташсем (Кашкӑр Микули, Скорикӑв-Маль, Блинов, Федарӑв, Чернов т. ыт. те) ҫӗнӗрен ҫӗнӗ сӑвӑ-йурӑсем шӑрантарма пуҫларӗҫ. Йумахҫӑсен, халлапҫӑсен йышӗ кунсеренех ӳсет. Вӑл ӳсӗме „Сунтал", „Хатӗр пул" журналсем ҫине час-часах пичетленсе пыракан йумахсем тӑрӑх, Чӑвашиздат кӑларакан кӗнекесем тӑрӑх та аванах курма пулать; Ҫапах, ку ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем, йумахҫӑсен ҫыракан автӑрсене пӑшӑрхантаракан тӗслӗхсем ҫук мар-ха. Йумахсене пуҫтарас ӗҫе, йумахҫӑсемпе ӗҫлессине пӗтӗмӗшпех аслӑлӑхпа-тӗпчев институчӗн сотрудникӗсем ҫине шаннӑ. Лешсем вара, пӳлӗмрен тухмасӑр халӑх пултарулӑхне „тӗпчесе" ларакан сотрудниксем, йумахсене алла илеҫҫӗ те, унтан-кунтан тӗрткелесе „йусанӑ" хыҫҫӑн, автӑрӗсем те хӑйсемех пулса тӑраҫҫӗ: хӑйсен йачӗсемпех вӗсем ҫав йумахсене хаҫатсенче, журналсенче пичетлеме сӗнеҫҫӗ йе кӗнеке туса кӑларма та вӑтанмаҫҫӗ (нумай пулмасть тухнӑ „Ача-пӑча йумахӗсем" т. ыт. те). Кама килӗшӳлӗ ӗҫ ку? Ку вӑл—ҫынӑнне вӑрлани, халӑх хушшинчи сӑмах маҫтӑрӗсенчен мӑшкӑлани пулмасть-и? Ҫаплах, вӑрлани тата мӑшкӑлани пулать, тетпӗр епӗр. Ҫак йӗркесӗрлӗх ҫинчен чӑваш писателӗсен союзӗ пӗлмест мар. Пӗлет. Ҫапах нимӗн те чӗнмест. Ҫак йӗркесӗрлӗхе амалантарса пыракансем ҫинчен, литхулиганствӑна тӗпренех пӗтересси ҫинчен правлени ларӑвӗнче татӑкла ыйту лартма вӑхӑт ҫитнӗ ӗнтӗ тахҫанах.

...К. Пайраш чылай ҫулсем хушши пӗр йапала та паманччӗ. Кӑҫалхи ҫул уншӑн чи продуктивлӑ ҫул пулса тӑчӗ: совет интеллигенцийӗ ҫинчен вӑл умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ произведени („Комсомол билечӗ", „Сестра", „Лилӑ йӑнӑшӗ") пичетлесе кӑларчӗ. Ҫавӑн пекех, Тихӑн Петӗркки ҫинчен те пирӗн вулакансем мансах кайма пуҫланӑччӗ. Ку автӑр, сакӑр-тӑхӑр ҫул хушши тӑхтаса тӑнӑ хыҫҫӑн, кӑҫалхи ҫул виҫӗ пйесӑ ҫырса пачӗ. Пйесӑсене пичете тата театрсенче лартма йышӑннӑ. Вӗсенчен пӗри халӗ ҫеҫ хупӑннӑ конкурсра иккӗмӗш премии илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Автӑрсен йышӗ, автӑрсен чӗлхе культурлӑхӗ самайах сисӗнӳлӗ хӑвартлӑхпа ӳсет. Анчах пайанхи вулакан татах та нумайрах автӑрсем, татах та культурӑлӑрах чӗлхепе ҫырнӑ тулли те тарӑн шухӑшлӑ произведенисем ыйтать. Вулакан ыйтуне ӑнӑҫлӑ ӗҫпе ответлес тесессӗн халиччен пирӗн литературӑра паларнӑ писателсемпе поетсен те хӑйсен культуралӑхне темиҫе хут ӳстерес йенӗпе, вулакансене килӗшӳлӗ те паха произведенисем парас йенӗпе чылайах ӗҫлемелле. Ку тӗлӗшпе С. Елкер пирӗн пур автӑрсемшӗн те пример пулса тӑрать тесессӗн нимӗнле йӑнӑш та пулас ҫук пулӗ, тетпӗр епӗр. „Хӗн-хур айӗнче" йатлӑ талантлӑ произведени панӑ хыҫҫӑн хӑйӗн „Вӑрҫӑ кунӗсемӗнче" вӑл чӗлхе йенчен, сюжетлӑхӗ йенчен те кӑштах кайалла чакрӗ пулсан, кӑҫал ҫырнӑ произведенийӗсенче („Унтри", „Кивӗ йалта" т. ыт. те) хӑйӗн пултарулӑхне, чӗлхе пуйанлӑхне, совет литературин тематики ҫавтери сарлака иккенне, кашни автӑр ҫав тематикӑ ҫинче ӗҫленӗ чухне хӑйӗн мӗнпур маҫтӑрлӑхне хума тивӗҫлине тепӗр хут кӑтартрӗ.

Паллӑ драматург П. Н. Оҫипӑв кӑҫалхи ҫул нихҫанхинчен те тухӑҫлӑрах ӗҫлерӗ. „Кулленхи ҫимфони" йатлӑ пйесӑ пичетлесе кӑларчӗ. Иртнӗ конкурсра пӗрремӗш премии илнӗ „Какламан тымарсем" пйеси унӑн чӑваш литературинче мухтава тивӗҫлӗ произведенисенчен пӗри пулса тӑрать.

Илле Тукташ та „Шурӑ розӑ" калав ҫырса пархатарлӑ ӗҫ турӗ.

Пирӗн поетсенчен кӑҫалхи ҫул уйрӑмӑнах Уйӑп Мишши, Аркадий Ӗҫхӗл, Ухсай Йаккавӗ йулташсем пысӑк ӳсӗмсем турӗҫ. Асӑннӑ автӑрсем Верховнӑй Советсен суйлавӗсем иртнӗ вӑхӑтра та активлӑн хутшӑнса ӗҫлерӗҫ. Халӑхӑн хаклӑ та шанчӑклӑ ывӑлӗ хӗрӗсем ҫинчен илемлӗ очӗрксем, калавсем, сӑвӑ-йурӑсем ҫырчӗҫ, хӑйсен творчествинче малашне татах та пысӑк ҫитӗнӳсем тума паха та пуйан материалсем туйавчӑҫ. Ухсайӑн „Халӑхсен ылттӑн кӗнеки" поема, Уйӑпӑн „Тӑван ҫӗршыв" йатлӑ сӑвӑсен сборникӗ, Ӗҫхӗлӗн „Ҫӗнтерӳҫӗсем" сӑвӑ кӗнеки тата хаҫатсенче, журналсенче пичетленсе пыракан йулашки вӑхӑтра ҫырнӑ сӑвӑлла новеллисем пирӗн литературӑри политикӑлла поезин паха тӗслӗхӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Аван йурӑсем, сӑвӑсем пачӗ Иван Ивник.

Ҫавӑн пекех, Н. Йанкас, В. Усли, М. Иастран, И. Малкай, А. Алка, М. Катра, А. Калкан, Мих. Пахчаҫ йулташсен йулашки произведенийӗсем—асӑннӑ автӑрсем чылай сисӗнӳлӗ утӑмсем туса малала кайнине палӑртаҫҫӗ.

Оригиналлӑ произведенисемсӗр пуҫне пирӗн поетсемпе писателсем кӑҫалхи ҫул вырӑс тата ытти халӑхсен литературинчи произведенисене чӑвашла куҫарас тӗлӗшпе те нумай ӗҫсем турӗҫ. Уйрӑмӑнах М. Горький, А. Чехӑв, Короленкӑ, Н. А. Островский произведенийӗсене, Джамбул сӑввисене, „Игарь полки ҫинчен хунӑ сӑмах" поемӑна куҫарса вулакансем патне ҫитерни ҫинчен хаваслансах палӑртса хӑварни кирлӗ.

Ҫавӑн пек пирӗн литературӑн кӑҫалхи ӳсӗмӗ. Ҫавӑн пек пирӗн поетсемпе писателсем кӑҫалхи ҫул тунӑ ӗҫсен питӗ те кӗскен илсе кӑтартнӑ тӗслӗхӗсем. Чӑваш литератури йулашки вӑхӑтра чӑн-чӑнах ӳсӗм ҫулӗ ҫине тухса хӑватлӑ утӑмсемпе малала кайнине епӗр аванах куратпӑр. Ҫак ӳсӗмсем ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫӗнтерӳле ҫитӗнӳсем малашне татах та пысӑкрах, мухтава тивӗҫлӗрех пуласси ҫинчен нимӗн иккӗленмесӗрех калама пултаратпӑр. Пирӗн писателсен коллективӗ умӗнче тӑракан пайанхи тӗп задачӑ вӑл—„литературӑ йухӑмӗнче парти линине тӗрӗс тытса пырса тата писателсен хушшинче большевикла критикӑпа самокритикӑна анлӑн сарса йарса, литературӑ фронтӗнчи сатӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене хӑвӑрт пӗтерсе пырасси писателсене чӑваш совет литературине малала аталантарса чечеклентерес ӗҫ тавра мобилизацилесси пулса тӑрать... Чӑваш писателӗсен союзӗ литературӑна малала ҫӗклентерме, чечеклентерме пултаракан, Аслӑ Сталин епохине тивӗҫлӗ монументлӑ произведенисем парассине пурнӑҫлама пултаракан чӑн-чӑн творчествӑлӑ организаци пулса тӑмала" (Чӑваш писателӗсен отчетпа суйлав пухӑвӗ йышӑннӑ резолюцирен).

„ПСК(б) Парти историйӗн Кӗске курсӗ" — марксисам-ленинисамӑн классикла произведенийӗ. Ку произведени пирӗн писателсене кулленхи ӗҫре калама ҫук вӑйлӑн пулӑшать. Ку произведени пирӗн писателсене большевикла идейӑпа хӗҫпӑшаллантарать. Ленин—Сталин партийӗн мухтавлӑ традицийӗсем тӑрӑх кӗрешме тата ҫӗнтерме вӗрентет. Ку произведенине тӗплӗн вӗренесси кашни писател умӗнче тӑракан хисеплӗ задачӑ пулса тӑрать.

Задачӑсем пысӑк. Мӗнле пысӑк пулсан та, вӑл задачӑсене пирӗн писателсен ҫирӗп коллективӗ ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа вулакансен умӗнче хӑйӗн пултарулӑхне уҫӑмлӑн кӑтартма пултаратех.

Петӗр МИТТА.

Республикăлă Испанирен Францине интернационаллă бригадăн боецĕсем таврăннă

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): Андре Марти, Марçел Кашен, Морис Торез Парижри вокзалта боецсене тĕл пулса илеççĕ. (Фотохроника ТАСС).

Нанкина çухатнăранпа пĕр çулталăк çитрĕ

Декабĕрĕн 13-мĕшĕнче Йапони захватчикĕсем Китай столицине Нанкина пырса кĕнĕренпе пĕр çулталăк çитрĕ.

Çак кун Китай хаçачĕсем Йапони агреççине хирĕç тăма Китай тăтăклăнах хăйула пулассине палăртнă, Китай тăтăклăнах парăнтарасса шанса çырнă.

Нанкина çухатни пĕр çулталăк çитнĕ май, Чан Кай-ши çапла каланă: „Йапони хăйĕн пĕтĕм çарĕ, тинĕспе сывлăш флочĕсем пулăшнипе 18 уйăх хушшинчи вăрçăра тĕп çулсем тăрăх выртакан вырăнсене кăна оккупаци тума пултарчĕ. Йапони Чанша тата Наньчан хулисене туртса илме тăрăшни ахалех пĕтсе ларни—Йапони çарĕн вăйсăрлăхне кăтартать. Ку тарăнччен йапонĕцсен çăмăлтарах условисенче çапăçмала пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсен китаĕцсемпе йăваргарах, сăртлă районсенче çапăçмала пулать".

Китай компартин хаçачĕ „Синьхуажибао" çырать: „Столицăна çухатни пĕр çулталăк тултарнине куянса паларнипе пĕрлех, епĕр хамăр хастарлă пулнине çухатмастпăр, пессимисăма кĕрсе ӳкместпĕр. Йапони вăрçа хăварт пĕтерме шутланă план арканса кайни тата Китай халăхĕ оборонă вăрçине çĕнтерӳлĕн пĕтерме хатĕр пулни—çаксем пирĕн боецсен хастарлăхне тата шухăшне тĕреклетеççĕ".

(ТАСС).

Савойа тата Ницца

Италин Франци территорийĕсене туртса илес ĕмĕчĕ французсен Францирен тинĕспе уйăрăлса тăракан çĕрĕсене (Тунис, Корсикă, Джибути) туртса илессипе çеç чарăнса тăмасть. Фашисла Итали çавăн пекех тата тӳррĕмĕх Франци республикине кĕрекен икĕ облăçа—Савойăна тата Ниццăна туртса илме ĕмĕтленет.

Савойăпа Ницца çар стратегийĕ тĕлĕшĕнчен пит пысăк вырăн йышанса тăраççĕ. Çак облăçсем иккĕшĕ те Франци [illegible] [illegible] вырăнсене, Франци территорийĕ тӳремлĕ пайĕ çине тухмалли çул пулса тăраççĕ. Кунсăр пуçне ватă Ницца Тулонпа—Франци Вăтаçĕр тинĕсĕн çыранĕ хĕрринчи чи пысăк çар гаванĕпе кӳршĕлĕ облăç пулса тăрать. Çак гаваньре вăрçă карапĕсен пысăк [illegible] [illegible].

[illegible] Ницца (Ницца хули те кĕрет) 3.736 тăваткăл километр лаптăкĕш çĕр йышанса тăрать, унта пурĕ 513 пин çын пурăнать.

Ницца хули тата унăн таврашĕнчи вырăнсем вĕсем—пуринчен те малтан, [illegible] курортла вырăнсем пулса тăраççĕ. [illegible] [illegible] çăкăр [illegible] Итали банкĕ валюта çуккипе хытă аптăрать). Ницца районĕнче промышлĕнвăçăн пурçăн, йăвăçран тĕрлĕ йапаласем тăвакан, парфӳмери, табак, консервă тата ытти йапаласем тăвакан отрăçлĕсем пур. Ницца чылайăх пысăк тинĕс порчĕ пулса тăрать.

Савойа—Франци кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи чылайăх пысăк облăçĕ. Сăртлă облăç, вăл Франци республикин икĕ административлă округĕнчен (департаментсенчен) тăрать [illegible] Италипе. Çак облăç йышанса тăракан çĕр талăкăшĕ—11 пин тăваткăл километра йăхăн, урăхла каласан вăл, сăмахран, Бельги государствин виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ территори йышанса тăрать. Савойăра çур миллуна йăхăн çын пурăнать. Облăçра пиçĕ те пуйан [illegible] тăвакан тата [illegible] тĕрĕкен темиçе хапрăк пур. [illegible] [illegible] феодаллă государствă пулнă, вăл економикăпа политика тĕлĕшĕнчен Францине çыхăнса тăнă. 1860 çулта тунă договăр тăрăх Франципе Итали хушшинчи чикĕсене палăртса çирĕплетнĕ чух, Савойа территорийĕ—Франци территорийĕ пулса тăрать, [illegible].

(ТАСС).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

А. В. Сомăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн предçедатĕлĕ пулма çирĕплетесси çинчен

Александр Васçилйĕвич Сомăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн предçедатĕлĕ пулма çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Предçедатĕлĕ З. АНДРЕЙĔВĂ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретарĕ Г. ГУСĔВ.

Шупашкар хули, 1938 çулти декабĕрĕн 15-мĕш.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

В. М. Шивĕрăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн предçедатĕлĕн пĕрремĕш заместитĕлĕ пулма çирĕплетесси çинчен

Васçилий Михайлăвич Шивĕрăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн предçедатĕлĕн пĕрремĕш заместитĕлĕ пулма çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Предçедатĕлĕ З. АНДРЕЙĔВĂ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретарĕ Г. ГУСЕВ.

Шупашкар хули, 1938 çулти декабĕрĕн 15-мĕш.

Украинăра гетманщчинăна пĕтернĕренпе 20 çул тулчĕ

Украинăра гетманщчинăна пĕтернĕренпе декабĕрĕн 14-мĕшĕнче 20 çул тулчĕ.

Совет Украининчи предприйатисенче, колхозсенче, шкулсенче нумай çынлă митингсемпе пухусем пулса иртнĕ. Гетманла бандăсен тискер террорĕ çинчен вĕсем ӳсĕр пуçпа асса çӳренисем çинчен республикăри ĕççыннисем тарăхса аса илеççĕ.

Черница йалĕнчи августăн 1-мĕш йачĕпе тăракан колхозăн (Новоград—Волынск районĕ, Житомир облăçĕ) клубне пит нумай халăх пуханнă. Унта 70 çула çитнĕ колхозник Ф. Заваьчук асаилӳсем каласа панă.

— 1918 çулти декабĕрĕн пĕрремĕш числисенче—тене вăл—пирĕн йăла Скоропадский гетманĕ. Германи империализмĕ [illegible], [illegible]. Гетманĕцсем хăйсене [illegible], [illegible], [illegible] пама ытрĕç. Епĕр пĕтĕм йăл пуçпа канашлатпăр та, приказа пĕртак çеç пурнăçа кĕртме шут турăмăр. Вăра гетманла бандитсем пирĕн йăл тăвăтă йĕнчен вут тĕртсе йăчĕç, 60 кил çунса кайрĕ. Çăлса хăварма май килмен хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем çунса кайрĕç. Хресченсен пурлăхĕ пĕтрĕ, пирĕн йалти 10 çынна бандитсем пулеметсенчен персе вĕлерчĕç. Украинăра ытти нумай йалсенчи ĕççыннисене те çакнах курма тивнĕ.

Хăйĕн сăмахĕн вĕçĕнче Заваьчук йулташ çапла каланă:

— Гетманла çынвĕлеренсем пайтах хуйхă кăтартнă пирĕн йăла. Халь ĕнтĕ паллама та çук. Халь епĕр пуйан та культуралă пурăнатпăр. Епĕр, Сталин йулташ хаввалантарса çĕкленескерсем, Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрле [illegible] [illegible] [illegible] шĕн хуйхă пулĕ.

(ТАСС).

Ытлашши тырра—государствăна

ЙЕТĔРНЕ. Çак кунсенче „Правда" колхоз государствăна 525 [illegible] тырă сутрĕ. Колхозниксем [illegible] пăт сутрĕç. [illegible] колхозник Николай [illegible] йулташ [illegible] пăт. [illegible] йулташ [illegible] пăт сутрĕç.

П. Йĕремейĕв.

ТĂВАЙ. Чутайри „Хурçă" колхоз членĕсем чылайĕшĕ хăйсен ытлашши тырра государствăна сутрĕç. [illegible] йулташ [illegible] центнĕр, [illegible] [illegible] йулташсем [illegible] центнĕр сутнă. Колхозпе [illegible] центнĕр сутнă.

В. Илйин.

Хĕрлĕ Чутай. Кивĕ Атикассинчи Кирăв йачĕпе тăракан колхоз кооперации урлă государствăна 138 пăт тырă сутнă. Государствăна тырă сутнăшăн дингатĕл илме [illegible] пачĕç.

К. Борисĕв.

ТУТАРКАС. Муркаш йалсоветĕнчи "Знамя труда" колхоз кооперации урлă 103 центнĕр тырă сутрĕ. Тырă сутас ĕç ытти колхозсенче те вăйланса пырат.

[illegible].

Савăтри библиотекăра

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтра илемлĕ те çутă библиотекă пур. Библиотекăна кашни кун 150 çын ытла пырса кĕнекесем, хаçатжурналсем илсе вуласçĕ. Кăçал 985 рабочи ытла илемлĕ литература кĕнекисене илсе вуланă. Пуринчен ытларах Н. Островскин „Хурçă йепле хĕрнĕ", Алексейĕвăн „Большевиксем", Елкерĕн „Хĕн-хур айĕнче" произведенисене вуласçĕ. Йулашки вăхăтра тата Ленин—Сталин произведенийĕсене ыйтакансем йыше нумай ӳсрĕ.

Библиотекăн фончĕ 9895 кĕнекене çитет тата 21 тĕслĕ хаçатжурнал илсе тăрать.

Таварла комбинатăн начальникĕ Соколовский йулташ 4 уйăх хушшинче илемлĕ литература 28 кĕнеке вуланă.

Г. Никифăрăв

Çĕнĕ çулти йолкăсене капăрлантарма 80.000 тенкĕлĕх тавар кӳрсе килнĕ

Пирĕн тăван çĕршывра телейлĕ ачасем кашни çулах çĕнĕ çула пысăк хавхаспа кĕтсе илеççĕ. Вĕсем валь ли çĕнĕ çул йолкисем туса иртереççĕ. Кăçал Чăвашторг йолкăсене капăрлантарма кирлĕ йапаласене 80 пин тенкĕлĕх кӳрсе килнĕ. Вăл шутран Чебторг Шупашкар хулине валли 30 пин тенкĕлĕх тупăннă.

Çавăн пекех, йолкăсене капăрлантарма кирлĕ йапаласене Чăвашторгăн районсенчи уйрăмĕсене те нумай кӳрсе килнĕ. Чăвашторгăн Канашри базипе уйрăмĕ 20 пин, Улатăрта—15 пин тата Çĕмĕрлере—5 пин тенкĕлĕх туйанса кунă.

Сут-пулă организацисен вăл йапаласене сутас ĕçе васкаса, [illegible].

„Трактăр" колхозра

◆◆ Автогараж. Мăн-Елменти (Вăрнар р.) „Трактăр" колхоз хăйĕн автомашинисене валли гараж туса лартнă.

Кĕскен

◆◆ Електростанци лартаççĕ. Шĕнерпуçĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) „Муравейник" колхоз 16 лаша вăйлĕ двигатĕл туйанна. Халĕ електростанци лартма тытăннă. Ăна çĕнĕ çул тĕлне туса çитереççĕ.

◆◆ Оборонă значокĕсем илчĕç. ССРС Верховнăй Советне суйлани çулталăк тултарнине уйăвланă май Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕнче 27 студент ГСО значокĕн 1-мĕш сыпăк нормине панă. Халĕ тата ПВХО значокĕн 1-мĕш сыпăк нормине пама 32 студент хатĕрленеççĕ.

◆◆ 27 спектакль. Тивĕшри (Ишлей р.) йал и çьмрăксенчен тăракан драмкружок çулталăк хушши ĕçлет ĕнтĕ. Кружокра 13 çамрăк тăрать. Драмкружок кăçал 27 спектакль лартса панă.

Атăл пăрĕ ларчĕ

Декабĕрĕн 14-мĕшĕнче çанталăк сивĕтрĕ. Сывлăш температури 25,9 градус сивĕ пулчĕ. Вăл кун ирхине 6 сехетре Атăл пăрĕ ларчĕ.

Декабĕрĕн 15-мĕшĕнче 28,8 градус сивĕ пулчĕ. Атăл пăрĕ çирĕпленчĕ. Ирхине çуран çынсем Атăл урлă каçса çӳреме пуçларĕç.

Хоккей вăййин сезонĕ

Çитес канмалли кун, декабĕрĕн 18-мĕшĕнче, Шупашкар хулинчи каток çинче хоккей вăййин сезонĕ уçăлать. Вăл кун „Спартак", „Темп", „Динамо" тата „Учитель" спорт обществисен хоккей командисем йулташла тĕл пулса вылăççĕ.

1939 çулта хоккейла та вăйăсем [illegible] пулĕ.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕ декабĕрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи сут-пулă работникĕсем валли „ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн") [illegible].

[illegible] „[illegible]" темăпа консультаци пулать.

Лекцине тата консультацине ирĕккĕнех кĕртеççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ПĔЛТЕРНИ

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн решенийĕ тăрăх, хăма çуракансемпе йăвăç каскалакансен Союз Тĕпкомĕн Илйинкăри канмалли çуртĕ Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн канмалли çуртсемпе вырăнсенчи санаторисен Горький облăçĕнчи управлени аллине куçнă. Малашне вăл ВЦСПС канмалли çуртсемпе вырăнсенчи санаторисен (УДОС) Горький облăçĕнчи управлени Илйинкăри канмалли çурчĕ [illegible] пулать.

Хăма çуракансемпе йăвăç каскалакансен Союз Тĕпкомĕн Илйинкăри канмалли çуртĕпе расчот тăвакан учрежденисемпе предприйатисем пурте укçа-тенкĕ операцийĕсемпе расчотсене малалла та тума пултараççĕ, расчот тумалли текущи счет—Государствă банкĕн Шупашкар хулинчи чăваш конторĕнче, № 150/803.

193[illegible] çулта сезонра канмалли çуртa кайма путёвкăсем туйанас текен учрежденисемпе предприйатисен з[illegible]йа[illegible]кă памалла тата мĕн чухлĕ путёвкă кирли çинчен договăр тумалла, адрĕс: г. Горький, ул. Свердлова. Дом Союзов, ком. 22, УДОС ВЦСПС по Горьковской области.

Путёвкăсене Илйинкăри канмалли çуртсăр пуçне тата УДОС системине кĕрекен Йуринри, Васçилсурскри канмалли çуртсене кайма та илме пулать.

ДИРЕКЦИ.

Чăвашдревпромсойузăн начар ĕçлеме сăлтавсем çук

Виçĕ уйăх каярах Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Чăвашкульпромсойузпа Чăвашвăрманпромсойуза пĕрлештерсе пĕр союз—Чăвашдревпромсойуз тунă. Çапла икĕ союз вырăнне хуçалăх йĕнчен вăйларах, çирĕпрех организаци пулса тăчĕ. Халĕ Чăвашдревпромсойуз системине кĕрекен 77 ертел тата икĕ промысла колхоз 18.133 çынна пĕрлештерсе тăраççĕ. Ертелсенче пысăккăн механизациленĕ 27 предприйати тата маçтерскойсем 40 ытла ĕçлеççĕ.

Çакăн пек пысăк вăйла тулли уçă курса Чăвашдревпромсойуз пĕрлештерекен ертелсене çирĕплетсех, вăйлатсах пыма кирлĕ условисемпе майсем пур. Акă, чĕртав[illegible]р ыйтăвне илер. Тĕрлерен сĕтел-пукансем, ачасене выльамалли йапаласем тата ыт. те тума йăвăç материалĕсем, корзинкăсем тума хăва хулăсем, чăпта çапма курăс (мунчала) хамăр республикрех кирлĕ чухлĕ тупма пулать. Мĕн чухлĕ тата промышленвăçăн отхочĕсем. Тунă йапаласене вырнаçтарасси пирки те иккĕленмелли çук. Ĕççыннисен таварсем илес пултарулăхĕ хăвăрт ӳссе пырать.

Анчах Чăвашдревпромсойуз системи ку таранччен хăйĕн производствă планне тултарса пыман. Уйрăмăнах куллен кирлĕ таварсем кăларасси начар. Çулталăкра 9 мĕлйун та 172 пин тенкĕлĕхе йахăн таварсем кăлармала пулсан, 10 уйăх хушшинче 4 мĕлйун та 67 пин тенкĕлĕх кăна кăларнă. Тата çакна палăртмала: пуринчен ытларах куçалăкра кирлĕ таварсем (сĕтел-пукансем, дивансем т. ыт. те) кăларасси питĕ хăвă йулнă.

Канашри сĕтел-пукансем тăвакан хапрăк хăйĕн планне тултарса пыраймасть. Вăл çапла союзăн пĕтĕм ĕçне кайала туртать. Мĕншĕн тесен, сĕтел-пукансем тăвасси союз паракан продукци хисепĕнчен 50 процентне йышанса тăрать. Анчах та хапрăк ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе тăтăкла ĕçсем туман-ха. Союз пĕрлештерсе тăракан ертелс ичен 30 ертелĕ хăйсен планне тултарса пымаççĕ.

Мĕншĕн-ха Чăвашдревпромсойуз системи начар ĕçлет? Промысла кооперацинче пулнă халăх тăшманĕсем—фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсем ертелсен ĕçне сахал мар сăтăрланă. Вĕсен йăвисене çĕмĕрсе такнă. Анчах тăшмансем туса хăварнă сăтăрлăха пĕтерес тĕлĕшпе Чăвашвăрманпромсойуз,çавнашкалах Чăвашкульпромсойуз руководителĕсем те çийĕнчех тăтăкла ĕçсем туман. Икĕ союза пĕрлештерсе пĕр союз тунă хыççăн та вăл йĕнĕпе тивĕçлĕ кĕрешӳ пуçарман. Çакнашкал пулни халĕ Чăвашдревпромсойузăн ĕçĕнче хыттăнах сисĕнет.

Чăвашдревпромсойуз лайăх ĕçлессине ертелсем татса параççĕ. Çавăн пекех, ертелсен ĕçĕн анăçлăхĕ аласгаççенчен килет. Çавăнпа ертелсене лайăх ĕçлекен тумашкăн чи малтанах вĕсене хуçалăхпа организацилĕх йĕнчен çирĕплетмеле. Мĕн кирлĕ-ха çакна тума? Политикăла-массăлă ĕçе вăйлатни, пĕччен аласгаççене ертелсене йăвăçтарни, кооперации уставне çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыни, ертелсенчен шанчăксăр елементсене пĕтĕмпех хăваласа кăларни кирлĕ. Ĕçлеме пурăнма лайăх условисем туса памалла. Çак вĕсене пурнăçа кĕртесси начар пырать-ха.

Политикăла-массăлă ĕç начар пулса пынине союз,тата ертел руководителĕсем производствăсем сапаланчăкан вырнаçнипе витме пăхаççĕ. Тӳрех калас пулать: пуçарулăх пулнă пулсан, ĕçе большевикла тимлĕхпе туса пынă пулсан аласгаççем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе лайăх туса пыма пур условисем те пулнă. 70 ертелте культработниксем пур. Кашни ертелте тенĕ пекех культурăпа политика совечĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсенче 421 çын. Ертелсенче 29 клуб, вуламалли çуртсем 19, хĕрлĕ кĕтессем 42 ĕçлеççĕ т. ыт. те. Анчах вĕсенче ĕçе кирлĕ пек организацилесе пыман пирки, массăлă ĕç тивĕçлипе пулса пыман. Ун çинчен хут пĕлменлĕхе пĕтересси начар пыни те лайăх çирĕплетсе парать. Хальхи вăхăтра Чăвашдревпромсойуз пĕрлештерсе тăракан ертелсенче хут пĕлменнисем 546 çын, хут сахал пĕлекенсем—1330 çын пур. Вĕсене вĕрентесси сӳрĕккĕн пырать-ха.

Аласгаççем хушшинче оборонăпа физкультурă ĕçне вăйлатса пыма лайăх майсем пур. 53 çĕрте Осоавиахимăн пуçламĕш организацисем ĕçлеççĕ. 59 ертелте организациленĕ физкультурă обшчĕствисем 2020 çынна пĕрлештерсе тăраççĕ. Вĕсен аллинче стрелковăй тирсем 13, икĕ стадион т. ыт. те. Анчах иртнĕ 10 уйăх хушшинче ГТО тата ПВХО значокĕсене илме 213 çынна çеç хатĕрленĕ. Физкультурăпа оборонă ĕçне Çĕмĕрле, Улхаш, Йепреç, Липăвка, Енĕшкасси, Чаканар ертелĕсенче кăна лайăх йĕркеленĕ.

Ертелсенче, маçтерскойсенче стахановла ĕçлекенсем сахал мар. Сотникăвăри стоьар Алексей Шумăв йулташ нормăна йăлăнах тултарса пырать. Новинскри каткапуйё [illegible] рабочи Петр Тимо[illegible] [illegible] норма [illegible]. [illegible] ертелĕнчи станочница Йегорăвă йулташ нормăна 200 процент ытла тултарать. Кунашкал пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем вуншарăн, çĕршерĕн шутланаççĕ. Вĕсен опытне сарсах пырса стахановла йухăма массăлă йухăм туса хурас тĕлĕшпе тивĕçлĕн ĕçлемеççĕ. Чылай ертелсенче стахановла йухăма йертсе пырас ĕçе культработниксем çине çеç хунă. Кунашкал тума бӳрократла руководителсем кăна пултараççĕ.

Хальхи вăхăтра ертел руководителĕсен час-часах кадрсем çитмен пирки аптраççĕ. Çапах вĕсем кадрсене хатĕрлемелли меслетсенчен пĕри техникă вĕренĕвĕ пулнине ăнласа илесшĕн мар. Техникă вĕренĕвне тивĕçлипе организацилемен. Хальхи вăхăтра пĕтĕмпе те 264 çын çеç вĕренеççĕ. Ку йĕнĕпе инженерла-техникла работниксем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Анчах вĕсене ĕçе йăвăçтарман.

ПСК(б) Парти Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ промысла кооперации руководителĕсене куллен кирлĕ таварсем кăларассине анăçлăн тултарса пыма, промысла кооперации производствисене сарса, вăйлатса пыма хушса хăварчĕ. Çакна кĕске вăхăтрах пурнăçа кĕртсе çитерме условисем çителĕклĕ. Чăвашдревпромсойузăн çĕнĕ руководствин ертелсене конкретлă йертсе пырса кашни ертел тăрăх плана пĕтĕмпех тултарса çитермеле тăвас пулать.

М. Т.

„Россснабсбытăн" Чăваш кантурне хăвăрт кирлĕ:

економист-плановик

тата

товаровед-учотчик

2—1

ЧĂВАШДРЕВПРОМСНАБСБЫТ организацисемпе колхозсене

ШИНА ТИМĔРĔ

тата ытти материалсем сутать.

Чăвашдревпромснабсбытăн кантурĕнчен ыйтмала. Адрĕс: г. Чебоксары, ул Калыкова, д. № 7.

Чăвашдревпромснабсбыт.

Государствăн Чăваш Академиллĕ Театр дирекцийĕ, местком тата коллектив театр артистне Асаф Михайлăвич Мудрава унăн амăшĕ

АННА ГРИГОРЙĔВНĂ ЧЕРНЬАЙĔВĂ

1938 çулти декабĕрĕн 14-мĕшĕнче вилнĕ пирки кульанни çинчен пĕлтереççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 654. 18 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР., заказ № 881. ф. б. 58×84 п. л.